АЛЕКСАНДР ПУШКИН

# Пĕчĕк трагедисем

Хыт кукар рыцарь

Моцартпа Сальери

Чул хӑна

Чума вӑхӑтӗнчи ӗҫкӗ-ҫикӗ

АЛЕКСАНДР
ПУШКИН

# Маленькие трагедии



## АЛЕКСАНДР ПУШКИН

# Пĕчĕк трагедисем

Кĕнекене А. С. Пушкинăн
пĕчĕк трагедийĕсене
кĕртнĕ.
Чăвашла вĕсене
П. Хусанкай,
Г. Ефимов,
Ю. Айдаш
куçарнă.

Художникĕ
Э. М. Юрьев

26659-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1983 ç.

Хыт кукар рыцарь

Моцартпа Сальери

Чул хăна

Чума вăхăтĕнчи ĕҫкĕ-ҫике

## ЧĂВАШ ÇЫРАВÇИСЕМ А. С. ПУШКИН ÇИНЧЕН

### А. С. ПУШКИН — ПИРĔН ЮРАТНĂ ПОЭТ

Пирĕн çĕнĕ поэзи анине пĕр чарăнмасăр шăваракан тепĕр юхăм вăл — вырăс поэзийĕн иксĕлми тинĕсĕ. Çав тинĕсрен чи малтан Пушкинăн пархатарлă хумĕсем, çинеçинех хӳсе килсе, пире хамăр чĕлхен хăватне, ун тӳсĕмлĕхне ĕнентереççĕ. Эпир Пушкинпа чăвашла калаçса пăхрăмăр. Пушкин халь пĕтĕм чăваш халăхĕпе калаçать. Пушкина эпир хамăр тума тытăннă çĕнĕ культура керменĕн чи кирлĕ чулĕ тетпĕр: вăл унăн сиккеленми тĕреклĕ никĕсне те выртмалла, таçтан курăнакан çӳллĕ тăррине те эрешлесе илемлетмелле...

«Илемлĕх чаплă пулмалла!» Илемлĕ эпир пурăнакан вăхăт, ăна чаплăн сăнарласа кăтартмалла. «Борис Годунов», «Моцартпа Сальери» тĕлĕнмелле чаплă, çавăн пекех «Грузи сăрчĕсем çинче...», «Ыйăхсăр каç çуралнă сăвăсем» те питĕ чаплă.

*Петĕр ХУСАНКАЙ,*
*чăваш халăх поэчĕ.*

**А. С. ПУШКИН — ЧĂН-ЧĂН ХАЛĂХ ПОЭЧĔ.**

Чăн-чăн реализм, пурнăçа пысăк кăмăлпа юратни, халăхăн ырă ĕмĕт-шухăшĕсене тата çыннăн таса чун-чĕрине чуна пырса тивекен кĕвĕ-сăвăсемпе çырса кăтартни — çак хăватлă пултарулăхпа ĕнтĕ аслă поэт пире тăван пек çывăх тăрать. Пурнăçри тĕрĕслĕхпе этемĕн çутă ăс-хакăлĕшĕн, сарлака кунçулпа телейлĕ ирĕклĕхшĕн, халăхăн çăлкусĕ пек тапса тăракан пултарулăхне чечеклентерсе ярассишĕн хăйĕн иксĕлми талантне халаллакан поэт, пирĕн хальхи пурнăçри хисеплĕ çын шутĕнче тăрса, пирĕн халăхсене культура ӳсĕмĕнче çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем тума хăват парса пырать.

...А. С. Пушкин — чăн-чăн халăх поэчĕ. Унăн ырă ячĕ, хĕвел пек çутă генийĕ пĕтĕм вырăс халăхĕн, çав хушăрах аслă Совет Союзĕнче пурăнакан мĕнпур тăванла халăхсен кăмăлне çĕклет. Поэтăн ĕмĕр-ĕмĕрлĕх çырса хăварнисем пирĕн çĕршыври çутта тухнă халăхсемшĕн пуриншĕн те пĕр пекех тĕлĕнмелле паха та хаклă...

А. С. Пушкин Атăл тăрăхĕнче пурăнакан нумай халăхсен пурнăçĕпе йăлисене, вĕсен фольклорне те пĕлнĕ. Унăн произведенийĕсенче Атăлпа Урал тарвашĕнче пурăнакан тутар, пушкăрт çыннисен сăнарĕсемпе пĕрлех чăваш çыннисем те тĕл пулаççĕ...

А. С. Пушкин — аслă вырăс халăх поэчĕ. Тивĕçлипе мухтанать унăн ячĕпе вырăс халăхĕ, хаклă вăл вырăс çыннисемшĕн. Хаклă вăл чăваш халăхĕшĕн те, вăл ăна хăйĕн тăван поэчĕ вырăнне хурса хисеплет.

*М. Я. СИРОТКИН,*
*педагогика наукисен Академийĕн член-корреспонденчĕ, профессор.*

**А. С. ПУШКИН — ВЫРĂССЕН АСЛĂ ПОЭЧĔ.**

Вырăссен аслă поэчĕ ирĕклĕхе мухтаса тата халăха юратса çырнă мĕнпур произведенисене кашни çынах чун-чĕререн кăмăлласа йышăнать.

Вилĕмсĕр поэтăн произведенийĕсене чăвашла куçарма Октябрьти революциччен хусленчех тытăннă. Анчах çав тапхăрта вăл çырнă сăвăсем шкулсенче вуламалли кĕнекесенче çеç тухкаланă. Аслă Октябрьти революци хыççăн чăваш халăхĕ поэтăн нумай-нумай сăввисемпе поэмисене, калавĕсемпе повеçĕсене тата романĕсене хăйĕн тăван чĕлхипе вулама тытăннă.

...А. С. Пушкин пултарулăхĕ чылай халăхсен литературине чечекленсе аталанма пулăшрĕ, нумай-нумай писательсемпе поэтсем унран вĕренсе пынă, халĕ те вĕренеççĕ... А. С. Пушкин пултарулăхĕ М. Федоров, К. Иванов, Тайăр Тимкки, Çеçпĕл Мишши, П. Хусанкай, И. Ивник тата ытти поэтсемпе писательсен пултарулăхне аталанма нумай пулăшнă. А. С. Пушкинăн вилĕмсĕр пултарулăхĕнчен пирĕн литераторсем сăнарсене ăнланмалла тума, чĕлхере янăравлă та витĕмлĕ пуплевсемпе усă курма вĕренеççĕ. Унăн чăннипе те генилле произведенийĕсем чăваш писателĕсене çĕнĕ те паха кĕнекесем çырма хавхалантарса пыраççĕ.

А. Пушкин халăхсем хушшинче курайманлăх пĕтесси тата вĕсем пурте пĕртăван пек пурăнма пуçласси çинчен ĕмĕтленсе шухăшланă. Халĕ пирĕн çĕршывра çавăн пек телейлĕ вăхăт яланлăхах килсе çитрĕ. Совет çĕршывĕнчи мĕнпур халăхсем тăванла туслă пурăнаççĕ.

*Е. В. ВЛАДИМИРОВ,*
*филологи наукисен докторĕ,*
*профессор.*

## ПОЭЗИ САЧĔ

Поэт çинчен калаçнă чух-и,
Вăл çырнине-и вуласан,
Умна поэзи сачĕ тухĕ
Çĕр çитмĕл çичĕ сăнпалан.

Çав садăн пур асамлă юрă.
Ăна илтсен — ним кирлĕ мар!—
Чуну пулать-и çепĕç, ырă,
Е чĕрӳне тивет кăвар;

Вара эс хатĕр чи илемлĕ
Юратупа çынна савма,
Е, çĕнтерме шанса, телейлĕн,
Тăшман умне хĕçпе тăма.

Асамлă йывăç пур çав садăн.
Вăл ĕмĕр çамрăк çеçкере.
Ăна курсан — хытса тăратăн,
Пите хĕвел сăнĕ кĕрет.

Вара эс те чечек лартасшăн
Ĕмĕтленетĕн, савăнан;
Эс ху та халăхшăн, çĕршывшăн
Илем кӳрессĕн туйăнать.

Мухтав, çĕршывăм! Эс типтерлĕн
Пăхса усратăн çав сада.
Мухтав ăна лартса ӳстернĕ
Астаçă Пушкин поэта!

*Александр АЛГА,*
*чăваш халăх поэчĕ.*

# Хыт кукар рыцарь

Ченстонăн
The Covetous Knight[1]
([1] Хыт кукар рыцарь — акăлчанла)
ятлă трагикомедийĕнчи
сценăсем







# I сцена

## Башньăра.

Альберпа Иван.

Альбер

Кирек мĕнле пулсассăн та пыратăп
Эп турнира. Кăтарт-ха шлем, Иван.

Иван ăна шлем тыттарать.

Çĕнни илес пулать. Ку — витĕр шăтăк.
Ку — юрăхсăр. Кам тăхăнтăр çакна?
Ылханлă граф Делорж! Аллу сан çирĕп!

Иван

Анчах эсир те парăмра юлмарăр:
Лаши çинчен çапса антартăр та,
Вăл талăк выртрĕ хускалмасăр — халь те
Ураланман пуль.

Альбер

Пурпĕр вăл пайталлă;
Венеци кăкăрумĕ арканман ун,
Кăкри те хăйĕн: çухалмасть çур пус та;
Хăйне валли тепре туянас çук.
Ма ун шлемне тӳрех хывса илмерĕм!
Хываттăм, герцогпа дамăсенчен
Кăшт вăтанман пулсан. Ылханлă граф!
Ма пĕрех хут вăл пуçăма çурмарĕ.
Тумтир те кирлĕ. Авă ун чухне
Кунта ларатчĕç рыцарьсем мĕнпурĕ
Атлас та бархатпа; эп, латăлли,
Пĕчченччĕ герцогăн кĕрекинче.
Ансăртран çеç-ха турнирта тесе
Хăтăлкаларăм. Халĕ мĕн калам-ши?
Ах, чухăнлăх! Епле чуна çиет вăл!
Делорж сулмаклă сăннипе шлема
Шăтарчĕ те ман çумранах вĕçтерчĕ,
Эп, çара пуçăн, шпорсемпе хĕстертĕм
Хам Эмира, çил-тăвăллăн хускалтăм —
Граф ывтăнчĕ шăп çирĕм утăма,
Черченкĕ паж пек; вырăнĕсенчен
Çĕкленчĕç дамăсем, Клотильда хăй те,
Питне аллисемпе хупларĕ шиклĕн.

Ман ăслая мухтарĕç герольдсем,—
Никам та ун чухне пĕлес темерĕ
Ман паттăрлăхăн, вăйăн сăлтавне!
Ун чух урса эп кайрăм шăтăк шлемшăн,
Сăлтавĕ паттăрлăхăн — хыткукарлăх.
Çапла! Ку чир-чĕре ертме ансат
Ман аттепе пĕрле пурăнаканшăн.
Эмир епле-ши, мĕскĕн?

Иван

Уксахлать-ха.
Ăна йĕнерлемешкĕн иртерех.

Альбер

Мĕскер тăвас-ха: Хуратур туянăп.
Ыйтма та уншăн нумаях ыйтмаççĕ.

Иван

Апла пуль те, укçи-çке пирĕн çук.

Альбер

Мĕн калаçать çав путсĕр Соломон?

Иван

Сăмахĕ пĕр ун — тек сире саклатсăр
Кивçен укçа параймăп, тет, пачах та.

Альбер

Саклат! Ăçтан саклат тупам эп, явăл!

Иван

Каларăм.

Альбер

Вăл мĕн тет?

Иван

Хытать, пăрça пек.

Альбер

Каламаллаччĕ санăн: ман аттем
Хăй те пуян, жид пек, тесе, кĕçех
Тупри мана юлать, тесе.

Иван

Каларăм.

Альбер

Вăл мĕн?

Иван

Пăрça пек хытă.

Альбер

Мурилесшĕ!

Иван

Вăл хăй килесшĕнччĕ.

Альбер

Мухтавлă туррăм!

Укçасăр кăлармастăп çакăнтан.

Алăка шаккаççĕ.

Кам?

Жид кĕрет.

Жид

Сирĕн мĕскĕн тарçăр.

Альбер

Эс мĕн, пĕлĕш!
Ылханлă жид, хисеплĕ Соломон,
Иртсем кунта: эс, тем, шанмастăн, теççĕ,
Кивçен пама.

Жид

Ах, ырă чунлă рыцарь,
Тупа тăватăп: парăттăм... май çук,
Ăçтан тупам укçа? йăлт чухăнлантăм,
Рыцарьсене пĕр вĕçĕм пулăшса.
Пĕри те тӳлемест. Сиртен ыйтсассăн...
Тен, пĕр пайне паратăр...

Альбер

Вăр-хурах!
Енчĕкĕмре укçа çӳрет пулсассăн,
Санпа айланăттăм-и эп? Çитет,
Ан кутăнлан, ыр çыннăм Соломон;
Парсам вуншарлăххи пĕр çĕрĕшне
Тытса ухтариччен.



Жид

Çĕрĕшĕпех-и?
Пуласчĕ ман ун чухлĕ!

Альбер

Тăнласам:
Е намăс мар сана тусусене
Хĕн аллине пама?

Жид

Тупа тăватăп...

Альбер

Çитет. Манран саклат ыйтни — айванлăх!
Мĕн парăп саклата? Сысна тирне-и?
Сутмалăх япалам пулсан, тахçан
Сутаттăм та. Е рыцарь чăн сăмахĕ
Сана сахал-и, йытă?

Жид

Ах, сăмахăр
Эсир сыв чух чăнах темрен те хаклă.
Фламанд пуянĕсен арчисене
Пурне те вăл, пĕтев пек, уçтарать.
Анчах ăна эсир мана парас-тăк,
Телейсĕр еврее, унган вара
Сасартăк хăвăр (тур çăлах) вилес-тĕк,
Вăл маншăн тинĕсе пăрахнă мулăн
Çăра уççийĕ пек кăна юлать.

Альбер

Манран ытлах пурнайĕ-ши аттем?

Жид

Кам пĕлтĕр? Кун шутне виçме пӳрмен.
Яш çын ĕнер чечекчĕ, халь виле вăл,
Тăвата шурсухал пĕкĕрĕлсе
Ăна масар çине йăтса каять ав.



Барон сывах. Вӑл вунӑ ҫул е ҫирӗм,
Е вӑтӑр пурӑнас пек, тур парсан.

Альбер

Суян, еврей: виҫ теҫетке ҫултан
Эп хам алла ҫитетӗп, ун чухне
Мӗне мана укҫа?

Жид

Укҫа? — ялан,
Кирек хӑш ӳсӗмре те вӑл юравлӑ:
Анчах яш ҫын унра тарҫа курать те
Унта-кунта пӗр шелсӗр чуптарать.
Ват ҫын ӑна, чи ҫывӑх тус тесе,
Упрать куҫ шӑрҫине упранӑ евӗр.

Альбер

О! Ман аттешӗн вӑл — ни тус, ни тарҫӑ.
Вӑл — ун хуҫи. Аттем пуҫне пӗкет
Ун умӗнче чӑн-чӑн Алжир чури пек,
Кӑкарнӑ йытӑ пек. Сив шӑтӑкра
Хыт ҫӑкӑр кӑшласа та шыв ӗҫсе
Ҫӗр ҫывӑрмасть—чупать тек, хамлатать вӑл,
Ун ылтӑнӗ арчисенче тӳлеккӗн
Выртать. Ан чӗн! Сехет ҫитсе ҫапсан,
Вӑл маншӑн ӗҫлӗ-ха, выртмашкӑн манӗ.

Жид

Чӑн, барона пытарнӑ кунсенче
Укҫа юхать пуль куҫҫультен ытла.
Аҫу еткерӗ час килинччӗ.

Альбер

Amen![1]

Жид

Май пур-тӑр...

[1] Аминь! (латинла).

Альбер

Мĕн?

Жид

Шутларăм эп: пулать-ха
Çапла тума...

Альбер

Мĕскер тума?

Жид

Итле:
Пур манăн пĕр паллана ватă çын,
Еврей, аптека тытакан...

Альбер

Сан пек
Ростовщикех-и е кăшт тӳрĕ чунлă?

Жид

Çук, рыцарь, Товий ĕçĕ урăхла —
Вăл тумламсем тăвать... чăн, тĕлĕнетĕн,
Тумлам ĕçне курсан.

Альбер

Вара мĕскер?

Жид

Шыв куркине пĕр виç тумлам тумлат та...
Ун ни тути, ни тĕсĕ палăрмасть;
Этем ăшра ыратнине туймасăр,
Хăсса асапланмасăр лăп вилет.

Альбер

Сан пĕлĕшӳ наркăмăшсем сутать.

Жид

Çапла — наркăмăшсем те.

Альбер

Эс кивçен
Мана çав имçама сĕнесшĕн мар-и
Пĕр икçĕр кĕленче вуншар тенке?



2. Заказ № 2645

Чувашская

Ж и д

Эсир манран куласшăн пулĕ те —
Çук; тен, эсир... шутларăм, тен, чăнах та,
Барон элчелĕ çитнĕ алăка.

А л ь б е р

Епле! ман аттене вĕлермелле-и?!
Мĕнле эс хăйрăн! Тыт, Иван, ăна.
Пĕлетĕн-и, çĕлен, жид чунĕ, йытă,
Сана çак самантрах эп хапхаран
Çакса хуратăп.

Ж и д

Айăплă! Каçарăр:
Шÿтлерĕм эп.

А л ь б е р

Иван, кантра тавай.

Ж и д

Шÿтлерĕм, тетĕп... Укçапа килсеттĕм.

А л ь б е р

Кай, йытă!

Жид каять.

Ак ăçта илсе çитерчĕ
Аттемĕн хыткукарлăхĕ! Мĕскер
Сĕнме жид хăйрĕ! Пар стакан эрех,
Чĕтретĕп эп... Иван, çапах укçа та
Кирлех-çке. Чуп, эппин, часрах жид хыççăн.
Ил унăн укçине. Вара кунта
Чернил илсе килен. Ăçтиçука
Парам расписка. Çав Иуда, путсĕр...
Ан кĕрт ăна кунта... Тăхта, тăхта,
Укçи те унăн наркăмăш шăршиллĕ,
Хăй несĕлĕн кĕмĕлĕсем пекех...
Эрех ыйтсаттăм эп.

И в а н

Эрехĕ пирĕн —
Тумлам та çук.

А л ь б е р

Мана Испанирен
Ремон парне яни ăçта тата?

Иван

Ӗнер леҫсеттӗм чи юлашкине
Чирленӗ тимӗрҫӗ патне.

Альбер

Астурăм...
Шыв пар эппин часрах! Ылханлă пурнăҫ!
Шутларăм та — герцогранах ыйтатăп:
Хытартăр аттене, аттем мана
Тӗпсакайра ҫуралнă шăшилле
Ан пăхтăр, пăхтăр ывăлӗ пекех.

# II сцена

## Путвал.

Барон

Чее юхха-хĕрпе е улталаннă
Ухманккипе тĕл пуласса кĕтсе
Çунан аскăнчăкла яра кунах эп
Сĕм путвалти арчамăмсем патне
Анас самантăма тем чухлĕ кĕтрĕм.
Телейлĕ кун! Паян эп пултаратăп
Хам улттăмĕш арчан тулман ăшне
Хальхаççăн пухнă ылтăна сапмашкăн.
Нумай та мар пек, пурпĕрех çапла
Ӳсет ман мул. Аçта-ши вуласаттăм:
Пĕррехинче патша салтаксене
Пĕр ывăçшарăн çĕр пăрахтарать те,
Тĕмескерен мăнаçлă сăрт пулать.
Патша çав сăрт çинчен вара хаваслăн
Сăнать шур чатăрсемлĕ айлăма,
Қарап чуппиллĕ анлă тинĕсе те.
Çаплах эп хам та, пĕчĕк ывăçпа çес
Çак путвала куллен мăскал пухса,
Хăпартрăм сăрт — халь унăн тăрринчен,
Мана мĕн пăхăнать, йăлтах куратăп.
Мĕн пăхăнмасть мана? Эп, демон пек,
Қунтан пур тĕнчене тытса тăратăп;
Эп хушсанах — çĕкленĕç керменсем,
Ман садăмсен улах илемлĕхне
Пуçтарăнĕç ырсем кĕтĕвĕпе.
Пĕр маншăнах вăй хурĕç музăсем те,
Ман урана чуптăвĕ ирĕк гений,
Қанусăр ĕçпеле çын пархатарĕ
Ӳпкевсĕр кĕтĕç ман парнемсене.
Эп шăхăрам — хăравçăллăн, сăмахсăр
Шуса кĕрет ман патăма усаллăх,
Юнланнăскер, çулать вăл аллăма,
Қуçран пăхса, шухăшăма вулать.
Мана итлет тĕнче, эп — никама та;
Мана нимскер те кирлĕ мар; эп лăпкă;
Хăватлă эпĕ: ак çакна пĕлни
Çитет мана...

*(Ылтăнĕ çине пăхать.)*



Ытла нумай та мар пек,
Çапах мĕн чухлĕ çын ăшталанни,
Ултав, куççуль те тархаслу, ылхан
Сулмаклăн курăнса тăрать унра!
Ак авалхи дублон. Пĕр тăлăх арăм
Ана хăварчĕ хальтерех... анчах
Виç ачипе чĕркуçленсе çур кун шăп
Малтан ўлерĕ кантăк умĕнче.
Пĕр чарăнчĕ, пĕр лўшкентерчĕ çумăр,
Ултавçă хускалмасть те; эп ăна
Хуса яраттăм пуль, анчах туятăп:
Вăл упăшкин парăмĕпех-ха килнĕ,
Ыран ларасшăн мар вăл тĕрмене.
Ак ку? Кăна Тибо илсе килсеччĕ —
Аçтан ăна вăл туптăр-ха, кахал?
Паллах, вăрланă; е тата çĕрле,
Мăн çул çинче, ката хўтлĕхĕнче...
Çапла! Мĕнпур çак ылтăншăн юхтарнă
Куççуль те, юн та тар çĕр тĕпĕнчен
Пĕр харăсах юхса тухас пулсассăн,
Эп хамăн шанчăклă путвалсенчех
Путса вилеттĕм пуль. Анчах та вăхăт.

*(Арчине уçма тăрать.)*

Арча уçма тăрсан, мана ялан
Тем чĕтретет, тем çунтарма пуçлать.
Шик мар ку (çук! камран хăрас-ха ман?
Çумрах ак хĕç: таса булат хуравлă
Çак ылтăншăн), çапах та чĕрене
Хĕсет эп халь те ăнланман пĕр туйăм...
Хăш чух калаççĕ тухтăрсем: пур, теççĕ,
Вĕлерўпе йăпанакан çынсем.
Уçса çăра ăшне кĕрттернĕ чух
Вĕсен çĕçси çынна тирсен туйма
Пултарнинех туятăп эп те: лайăх,
Çав вăхăтрах хăрушă.

*(Арчине уçать.)*



Ак рехетĕм!

*(Укçа пăрахать.)*

Кайсамăр, тек çитет чупса çĕр тăрăх,
Çын хуйхипе суйхишĕн вĕтĕнсе.
Вăй, лăпкăлăх ыйхи сире çывраттăр,
Турăсене çывратнă пек çӳлте...
Паян хама валли мункун тăвам-ха:
Çурта çутам кашни арчам умне,
Уçам та вĕсене — пăхам, пăхам
Йăлтăртатса выртан купасене.

*(Çуртасем çутать те арчисене пĕрин хыççăн теприне уçать.)*

Патша эп халь!.. Епле асамлă çутă!
Хăватлă, пăхăнуллă ман патшалăх;
Телейĕм, чысăм, чапăм йăлт умра!
Патша эп халь... анчах та кам ман хыççăн
Хăй аллине власть илĕ? Манăн тĕпчĕк!
Управсăр, ăссăр юхăнтаракан,
Аскăнчăксен те ӳсĕрсен тăванĕ!
Куçа хупам кăна, вăл, вăл! кунта,
Çак тăнăç, чĕмсĕр маччасем айне
Выçкуç тус-йыш ушкăнĕпе анать те,
Уççисене ӳт çумĕнчен вăрлать те
Кула-кула уçать арчамсене.
Пуçлать вара юхмашкăн пĕтĕм мулăм
Тула пĕлмен атлас кĕсъесене.
Таса савăтсене вăл аркатать,
Патша çуне вăл пылчăка ĕçтерĕ —
Йăлт салатать... Пурах-и унăн тивĕç?
Е çакă пĕтĕмпех вăл янтă мул-и?
Е лекнĕ-и шӳтле, шакмак ăсти
Хырса пуçтарнă евĕр пĕр каçра?
Кам пĕлтĕр-ха, мĕн чухлĕ йывăр шухăш,
Хама тытса чарса асапланни,
Каç çывăрмасăр кунăн хăшкăлни

Ман пулнă çакăншăн? Тен, ывăл калĕ,
Чĕрем мăкпа ман витĕннĕ тесе,
Эп нимĕн те туйман тесе, тен, совесть,
Чуна чăрмалакан тискер чĕрчун,
Чĕнмен хăна, йӳтетмĕш павракан,
Тӳрккес кивçен паран, тухатмăш карчăк,
Çут уйăха çăтса, масарсенчен
Вилесене те хăвалаканскер,—
Мана çав совесть кăшламан та тейĕ?..
Çук, ху малтан асаплăн пух-ха пурлăх,
Ҫайран пăхар вара, епле салатăн
Юн юхтарса пуçтарнине эс, мĕскĕн.
Ах, тивĕççĕррисен куçĕсенчен
Ман пытарасчĕ путвала! Ларасчĕ,
Хурал пек, арчамсем çине килсе
Виле шăтăкĕнчен, хам мулăма
Пур чĕр куçран хальхи пек пытарасчĕ!..

# III сцена

*Керменте.*

**Альбер, герцог.**

**Альбер**

Ёненĕр, государь, нумай эп тӳсрĕм
Нуша мĕскĕнлĕхне. Вăл пулмасассăн
Ӳпкевĕме илтессĕр çук эсир.

**Герцог**

Сире эп ĕненетĕп, ырă рыцарь,
Айăплас çук сирешкелли сăлтавсăр
Хăй ашшĕне. Ун пек усал сахал...
Лăпланăр: асăра пĕччен чухне
Пит шавламасăрах намăслантарăп.
Кĕтетĕп-ха. Тахçантанпах курман.
Маçакăн тусĕ пулнă вăл. Асрах-ха;
Пепке кăначчĕ эпĕ ун чухне,
Лаши çине лартатчĕ те мана вăл
Тем йывăрăш шлемне тăхăнтаратчĕ.
Собор чанехчĕ шлемĕ.

*(Чӳречерен пăхать.)*

Çавă кам?
Вăл мар-и?

**Альбер**

Çавă, государь.

**Герцог**

Кайсамăр
Леш пӳлĕме. Чĕнеп кайран.

Альбер каять; **барон** кĕрет.

Барон,
Хавас сире тăн-тăн, патвар курмашкăн.

**Барон**

Телейлĕ эп те, государь: вăй çитрĕ
Эсир хушнипеле кунта килме.

**Герцог**

Барон, нумай пулать курнăçманни.
Мана манман-и?

Барон

Эп-и, государь?
Хальхи пек астăватăп. О, эсир
Пит йăрăччĕ ача чухне. Ват герцог
Қалатчĕ: ну, Филипп (мана çапла
Филипп тесе чĕнетчĕ), эс мĕн тейĕн?
Пĕр çирĕм çул иртсен, санпа эпир
Ухмахăн тăрăпăр ун умĕнче...
Ну, сирĕн умăрта, эппин...

Герцог

Çĕнелтĕр
Çав паллашу тепре. Двора ан манăр.

Барон

Эп ватă ĕнтĕ, государь: дворта
Ман мĕн тăвас? Эсир яш çын; сире халь
Уяв, турнир сăхлантарать. Унта
Эп юрăхсăр. Тен, турă вăрçă парĕ —
Ун чух эхлетĕп,— пурпĕр ут утланăп;
Вăй çитĕ сирĕншĕн кив хĕçĕме
Чĕтревлĕ аллăмпа тепре йăтмашкăн.

Герцог

Барон, эсир тăрăшнине пĕлетпĕр;
Эсир маçакшăн пулнă тус; сире
Аттем ман хисепленĕ. Эпĕ хам та
Хăюллă рыцарь теттĕмччĕ — ларар-ха.
Çук мар-тăр сирĕн ачасем?

Барон

Пĕр ывăл.

Герцог

Мĕн-ма ăна курмастăп хам çумра?
Сире двор йăлăхтарнă. Çулĕпе те,
Ятпа та унăн пулмалла кунта.

Барон

Дворти шăв-шавлă пурнăçа савмасть вăл;
Хăюсăр та ялан салхуллăскер,
Тек замок тавралли вăрмансенче
Çўрет, пăлан пек.

Герцог

Пач та лайăх мар
Ку ютшăну. Эпир хăнăхтаратпăр



Хаваслă балсене, турнирсене —
Ярсамăр çеç кунта; сиртен пулинччĕ
Ятне кура укçа ăна валли...
Тем тĕксĕмлентĕр, çул-им ывăнтарчĕ
Сире?

Барон

Çук, государь, эп ывăнман —
Эсир вăтантаратăр. Куçа-куçăн
Сире каласшăн марччĕ те, анчах
Ирĕксĕрех мана калаттаратăр
Хам ывăлăм çинчен вăрттăннине.
Шел, государь, анчах вăл тивĕç мар-çке
Ыр тунине те, Сирĕн кăмăла та.
Çамрăклăхне вăл ирттерет чарусăр,
Асса-супса...

Герцог

Ку пĕтĕмпех, барон,
Вăл пĕчченрен килет. Çамрăксене
Йăлт пĕтерет ним ĕç çукки, пĕчченлĕх.
Ăна кунта ярсамăр çеç — вăл манĕ
Тĕттĕмлĕхрен килен хăнăхăва.

Барон

Каçарăр, государь, анчах та эпĕ
Пултараймастăп килĕшме кунпа...

Герцог

Мĕскершĕн-ха?

Барон

Каçарăр ват çынна...

Герцог

Ыйтатăп: мĕншĕн килĕшместĕр, калăр
Чăн сăлтавне.



Барон

Ывăлăма чунтан
Çиллентĕм.

Герцог

Мĕншĕн?

Барон

Айăпĕ ун пысăк.

Герцог

Мĕнле ăнланмалла ку сăмаха?

Барон

Ан ыйтăр, герцог...

Герцог

Ку тĕлĕнтерет.
Е уншăн намăс-и сире?

Барон

Чăн... намăс...

Герцог

Мĕн турĕ вăл?

Барон

Вăл пулчĕ... вĕлересшĕн
Мана.

Герцог

Мĕн? Вĕлересшĕн?! Эп ăна,
Хурах тесе, суд аллине паратăп.

Барон

Çирĕплетсех каламăп эп, пĕлсен те
Вăл тем пек кĕтнине ман вилĕме,

Вăл темиçе хутчен пикеннине
Мана...

Герцог

Мĕн?

Барон

Çаратма.

Альбер пӳлĕме сиксе тухать.

Альбер

Барон, суятăр.

Герцог

*(ывăлне)*

Епле хăятăр?..

Барон

Эс кунта! эс хăйрăн!..
Эс аçупа çапла-и калаçан!..
Эп государь куç умĕнче суятăп!..
Е эпĕ рыцарь мар?

Альбер

Эсир суеç.

Барон

Мĕнле аça çапмасть-ха, аслă турă!
Çĕклс эппин, хĕç калĕ тĕрĕсне!

*(Перчеткине перет, ывăлĕ ăна васкавлăн çĕклет.)*

Альбер

Тавах. Аттен чи малтанхи парни ку.

Герцог

Мĕн куртăм эп? мĕн пулчĕ ман умра?
Ват ашшĕ чĕнчĕ — йышăнчĕ ачи!
Хăш вăхăтра эп çакрăм герцогсен
Сăнчăррине! Шăпланăр: эсĕ, ăссăр,
Эс те, тигр çури! çитет.

*(Ывăлне.)*

Пăрахăр:
Ак ку перчеткине те парăр.

*(туртса илет).*

Альбер

*(a parte*)*

Шел.

Герцог

Чӗрнисемпе ҫаклатнӑ, чунилли!
Халех ҫухалӑр: хам сире чӗнмесӗр
Ан курӑнӑр тек куҫӑм умӗнче,
Хӑюлӑх ҫитерсе.

Альбер тухать.

Телейсӗр ватӑ,
Е намӑс ҫук...

Барон

Ҫаҫарӑр, государь...
Тек тӑраймастӑп эп... чӗркуҫҫисем ман
Ҫемҫелчӗҫ... пӑчӑ! Ах, ҫӑраҫҫисем,
Ҫӑраҫҫисем ӑҫта ман!..

Герцог

Вилчӗ. Турӑ!
Усал тӗнче, усал чун-чӗресем!

* Айккинелле (латинла).



# Моцарт и Сальери



# Пӳлӗм.

Сальери

Каласҫӗ: чӑнлӑх ҫук ҫак ҫӗр ҫинче.
Анчах ҫӳлте те ҫук вӑл. Маншӑн ку
Пусламӑш гамма евӗрлех халь паллӑ.
Илемлӗхе эп юратмах ҫуралнӑ:
Ача чухнех-ха, хамӑр чиркӳре
Орган сасси янӑраса кайсассӑн,
Итлеттӗм те — ҫут тӗнчене манаттӑм,
Куҫҫуль юхатчӗ чун ҫӗкленнипе.
Тӑрлавсӑр вӑйӑ-кулӑран час писрӗм;
Гармонирен инҫе ӑслӑлӑхсем
Мана туртмастчӗҫ; сиввӗн те мӑнаҫлӑн
Эп сиртӗм вӗсене, шав музӑкшӑн
Ҫунаттӑмччӗ. Пӗрремӗш утӑм йывӑр,
Кичемччӗ ҫул малтан. Анчах ҫӗнтертӗм
Яш чухнехи тумхахлӑ чӑрмава.
Илемлӗх никӗсне эп ал ӑсти пек
Тытса курасшӑн пултӑм: хӑвӑрт-хӑвӑрт
Вӗрентӗм вылятма пӳрнемсене,
Ик хӑлхана — илтме вӗрентрӗм тӗрӗс.
Кӗвӗленен сасса чара-чара,
Виле пек касса пӑхрӑм музӑка.
Гармоние эп алгебрӑпала
Тӗрӗслесе хӑтлантӑм. Тин вара,
Мӗнрен мӗскер пулмаллине пӗлсессӗн,
Пуҫтаххӑн ӗмӗт тытрӑм хам ҫырмашкӑн.
Ҫыра пуҫларӑм эп, анчах та вӑрттӑн
Мухтав ҫинчен шухӑшлама хӑймасӑр
Улах та лӑпкӑ хамӑн пӳлӗмре,
Хӑш чух ҫӗрӗпеле куҫа хупмасӑр,
Ик-виҫӗ кун ҫийи-ҫими ларатӑм,
Савӑннипе йӗре-йӗре ӗҫлеттӗм,
Унтан... вута переттӗм ҫырнине:
Хам шухӑшӑм, хам кӗвӗленӗ ҫемӗ
Тӗтӗмпеле вӗҫсе ҫухалнине
Сип-сивӗ куҫӑмпа пӑхса тӑраттӑм!..
Ку ҫеҫ-и? Ӑслӑ Глюк ҫак тӗнчене
Хальччен эпир илтсе курман, асамлӑ,
Ытараймм янрав илсе килсессӗн,
Унччен мӗн пӗлнине, юратнине,
Чунтан-вартан ӗненнине — йӑлтах

Эп пӑрахмарӑм-и вара? Ун хыççӑн,
Ӳпкелешмесӗр, савӑнса эп утрӑм.
Çултан аташнӑ этеме такам
Чӑн çул çине кӑларнӑ пек ку пулчӗ.
Куллен çине тӑрса ӗçленипе
Вӗçӗ-хӗррисӗр çак илемлӗхре
Чылай çӳле çӗклентӗм эп. Мухтавӑм
Çывхарчӗ ман пата: çынсен чӗри
Ман кӗввӗмпе ӑшӑннине туяттӑм.
Телейлӗ çынччӗ эп: хам ӗçӗмпе,
Ыр ятӑмпа хаваслантаттӑм лӑпкӑн;
Çаплах илемлӗхри юлташӑмсен
Ӑста тума пултарнӑ ӗçӗ те,
Мухтавӗ те мана савӑнтаратчӗ.
Çук! Эп нихçан та кӗвӗçсе курман —
Парижӑн чурӑс эшкерне Пиччини
Хӑй çеммипе йӑлт парӑнтарнӑ чух та,
Пӗрремӗш хут янранӑ «Ифигенин»
Пуçламӑш кӗввине хам илтнӗ чух та...
Кам калӗччӗ мӑн кӑмӑллӑ Сальери
Тусан та хӑйӑр кӑшлакан çӗлен пек,
Этем ури таптанӑ йӗрӗнчӗк
Хура çӗлен пек, кӗвӗç çын тесе?
Никам калаймӗччӗ. Анчах ак халӗ...
Хамах калатӑп — кӗвӗç эпӗ халӗ!
Мӗнпур ӑша-чикке кӗвӗлтерсе,
Тӳсме çук кӗвӗçетӗп эп. Эй, турӑ!
Ӑçта-ха тӗрӗслӗх? Кама-ха пӳрнӗ
Таса талант, вилми çап-çутӑ гени?
Ӗçе юратнипе хӑйне манса,
Кунне-çӗрне пӗлмесӗр тӑрӑшса,
Кӗлтунӑ пек ыйтан ӗçчене мар,—
Ытахальтен ӗнерне вӑйӑçа,
Шӑв-шавлӑ пурнӑçра çӑмӑлттайла
Юртса çӳрекене... Эх, Моцарт, Моцарт!

*Моцарт кӗрет.*

Моцарт

Аха! эс куртӑн та-мӗн! эп сана
Кӗтмен çӗртен кӑшт култарас тесеттӗм.

Сальери

Кунта-им эс?! — Хӑçантанпа?

Моцарт

*Тин çеç*

Сана пӗр ӗç эп кӑтартасшӑнччӗ;
Анчах, хупах умӗпеле иртӳçӗн,



3. Заказ № 2645.



Эп илтрĕм сĕрме купăс сассине...
Ах, тусăмçăм Сальери! Ĕмĕрне те
Ун евĕр кулăш эсĕ тĕл пулман-тăр.
Çав хупахра пĕр суккăр купăсçă
Ман кĕввĕме калать: voi che sapete [1].
Янраттарать кăна! Тĕлĕнмелле!
Ун вăййине сана итлеттермесĕр
Тӳсме пултараймарăм эп. Кĕрех.

Сĕрме купăс тытнă суккăр ватă çын кĕрет.

Қала-ха пĕр-пĕр Моцарт кĕввине!

Купăсçă «Дон Жуан» опера арине калать;

Моцарт кулать.

Сальери

Эппин кулатăн эсĕ?

Моцарт

Ах, Сальери!
Ку сапшăн кулăшла та мар-и?

Сальери

Çук.
Кулаймăп Рафаэль Мадоннине
Маляр вараласа ӳкернинчен,
Кулаймăп Алигьери сăввине
Чыссăрласа пароди çырнинчен.
Каях, ватти!

Моцарт

Тăхта-ха, ак сана:
Ĕçех ман сывлăхшăн.

Купăсçă каять.

Халь эс, Сальери,
Тем... кăмăлсăр. Эп кĕрĕп ӳлĕмрен.

[1] «Эсир пĕлекенсем»,— Моцартăн «Фигаро туйĕ» оперипчи Керубино арийĕн пуçламăшĕ (итальянла).

Сальери

Мĕскер эс кăтартасшăнччĕ мана?

Моцарт

Тем мар — ахаль кăна. Пĕр каçхине
Çывăраймасăр асаплантăм эпĕ,
Пуçа ик-виçĕ шухăш пырса кĕчĕ;
Паян эп çыртăм вĕсене. Сана
Итлеттерсе пăхасшăнччĕ; анчах
Вăл шухăш мар халь сан.

Сальери

Ах, Моцарт, Моцарт!
Хăçан сана эп итлемен? Ларсам;
Кала.

Моцарт

*(фортепиано умĕнче.)*

Çакна асту итленĕ чух;
Эп çамрăкрах, теер; хĕре юратнă —
Пит хытă мар-ха, çиелтен кăна;
Ларатăп савнипе е тусăмпа —
Санпах пулам. Хаваслă эп... Сасартăк:
Хĕвел пач сӳннĕн туйăнать мана,—
Сехре хăпартмăш ахăр самана
Е çавнашкал хăрушлăх çитрĕ,— тейĕн...
Итле, калам.

*(Фортепиано калать.)*

Сальери

Эс, çак япалапа
Килекенскер, хупах умне тăрса,
Итленĕ суккăр купăсçа! — Эй, турă!
Эс, Моцарт, хăвна ху хисеплеместĕн.

Моцарт

Пырать-и ку?

Сальери

Мĕн чухлĕ тарăн шухăш!
Мĕнле хăюллă, хӳхĕм, килĕшӳллĕ!
Эс, Моцарт, турă, мĕншĕнне—пĕлместĕн;
Эп, эп пĕлетĕп.

Моцарт

Ха! Чăнах-и? Пулĕ...
Анчах ман туррăн хырăмĕ пит выçрĕ.

Сальери

Итле-ха: «Ылтăн Арăслан» хупах —
Начарах мар, кěрсе çисе тухар-и?

Моцарт

Юрать те пулě; эп хавас. Анчах
Киле кайса калам-ха арăма —
Ан кěттěр апата.

*(Каять.)*

Сальери

Асту, кěтетěп.
Çук! Хама хам эп тек хирěçлейместěп:
Ман чармаллах ăна, çапла шăпам;
Чараймасан — эпир пěтетпěр пурте,
Пур музăкри мухтавлă ăстасем те,
Ман евěр пěчěк чап илни çеç мар...
Мěн усă пулě, Моцарт пурăнсан,
Татах çӳлтен çӳле вăл çěкленсессěн?
Илемлěхе хăпартě-и апла вăл?
Çук, вăл вилсен каллех ăсталăх чакě:
Хăй вырăнне вăл гени хăвараймě.
Мěн ун усси? Çӳлти пирěштилле
Пире — тăпра ачисене — пăртакçă
Çăтмах юррисемпе вăл илěртсе,
Çунатсăр ěмěте хускатě те,
Каллех ак таçталла вěçсе çухалě.
Вěçех эппин! Часрах кайни паха.
Ак наркăмăш, чун савнă ман Изорăн
Чи юлашки парни. Вунсакăр çул
Ăна чиксе çӳретěп хампала,
Унтан вара хам пурнăçăм мана
Тӳсме хал çук суран пек туйăнатчě,
Хăш чух лараттăм пěр кěрекере
Ним сыхсăр, ним сисмен тăшманăмпа,
Анчах тивмерěм наркăмăшăма;
Хăравçă мар эп, кӳренетěп хытă,
Хыпмастăп пурăнасшăн та, çапах
Тăхтарăм, васкатмарăм имçама.
Вилес тесе пит тарăхнă чухне
Эп шухăшлаттăм: мěн вăл вилесси?
Кунçулăм, тен, сасартăк савăнтарě,
Тен, пěр-пěр ыррă, пархатарлă каç
Ман тем çырса памалăх вăй тапранě;
Тен, çěнě Гайдн вилěмсěр, хăватлă
Кěввисемпе мана йăпатě, теттěм...

Тăшманăмпа эп ĕçкĕ ĕçнĕ чух,
Тен, тупăнĕ усалтарах тăшман,
Тен, аслăрах, хаяртарах этем
Мана хăртса кӳрентерме пултарĕ,
Вара, савни парни, ĕç тупăн, теттĕм.
Эп тĕрĕс шухăшланă! Ак иккен
Чи курайми тăшман, ак çĕнĕ Гайдн,
Чуна тăраниччен вăл килентерчĕ!
Халь — вăхăт çитрĕ! Юрату парни,
Куçсам паян эс туслăх куркине.

# II сцена

*Хупахри уйрăм пӳлĕм; фортепиано.*

Моцартпа Сальери сĕтел хушшинче.

Сальери

Мĕн эс паян пит сӳрĕк?

Моцарт

Эп-и? Мар-ҫке!

Сальери

Эс, Моцарт, темшĕн кăмăлсăр пулас?
Апачĕ тутлă, чун уҫҫи — эрех,
Эс ним те шарламастăн, шав салху.

Моцарт

Чăнне калас пулсассăн — Реквием
Мана пăртак шухăшлаттарчĕ.

Сальери

А!
Эс Реквием ҫыран? Нумайранпа-и?

Моцарт

Пĕр виҫ эрне. Анчах тĕлĕнмелле...
Сана эп каламан-и?

Сальери

Ҫук.

Моцарт

Итле-ха:
Виҫ эрнесем пулать пуль ҫав — киле
Кая юлса эп таврăнтăм ҫĕрле.
Ман патăма пĕр ҫын-мĕн кĕрсе тухнă.
Эп темшĕн шухăшларăм ҫĕрĕпех:
Кам пулнă вăл? Мĕн кирлĕ-ши ăна?
Вăл тепĕр кун та пынă, эп каллех
Килте пулмарăм. Виҫҫĕмĕш кунне
Эп ывăлпа урайĕнче выляттăм.
Мана чĕнмешкĕн кĕчĕҫ; тухрăм эп.
Хура тумтирлĕ ҫын пуҫ тайрĕ те,
Ҫырса памашкăн ыйтрĕ Реквием,



Хӑй пач ҫухалчӗ. Лартӑм та — часах
Ҫыра пуҫларӑм, ҫавӑнтан вара
Пымарӗ ман пата хура этем;
Юрать-ха пыманни: ҫырса пӗтертӗм;
Ҫапах та йывӑр, шел пек уйрӑлмашкӑн
Хам ӗҫӗмрен. Анчах эп...

Сальери

Мӗн тата?

Моцарт

Ҫук, намӑс калама куна...

Сальери

Мӗне?

Моцарт

Ҫав ман хура этем халь кунӗн-ҫӗрӗн
Ҫӳрет пек хыҫӑмран. Ӑҫта кайсан та —
Мӗлке пек хӑвалать. Паян та акӑ
Ларать пек иксӗмӗр хушшӑмӑрта...

Сальери

И, тусӑм! Мӗн ача пек шикленетӗн?
Ан хып ҫук япалашӑн. Бомарше
Калатчӗ шав мана: «Итле, Сальери,
Пуҫна пырса кӗрсессӗн хура шухӑш,
Шаплаттарсам шампань кӗленчине
Е «Фигаро авланнине» вула».

Моцарт

Апла-ҫке! Бомарше вӑл сан тусуччӗ;
Эс ун валли «Тарар» ҫырса парсаттӑн,—
Шеп япала. Унта пӗр кӗвӗ пур...
Ана эп хам телейлӗ чух юрлатӑп...
Ла-ла-ла-ла... Ах, тӗрӗс-ши, Сальери,



Çав Бомарше пĕрре темле çынна
Наркăмăшпа вĕлернĕ тенисем?

Сальери

Çук пулĕ: вăл ытла та кулăшлаччĕ,
Пулаймĕччĕ унран...

Моцарт

Вăл гени çав —
Сан пек, ман пек вăл. Генипе усал ĕç
Нихçан та пĕрлешеймĕç. Тĕрĕс мар-и?

Сальери

Çапла пуль тетĕн-и?

*(Моцартăн куркине наркăмăш ярать.)*

Ĕçер, эппин.

Моцарт

Ку саншăн, тусăм, Моцартпа Сальери—
Гармонин икĕ чаплă ывăлĕ —
Ĕмĕрлĕхех туслашнăшăн.

*(Ĕçет.)*

Сальери

Тăхта,
Тăхта, тăхта!.. Эс ĕçрĕн!.. Мансăрах?

Моцарт

*(Салфеткине сĕтел çине пăрахать.)*

Çитет, тăрантăм эп.

*(Фортепиано патне пырать.)*

Итле, Сальери,
Ак манăн Реквием.

*(Калать.)*

Йěретěн мар-и?

Сальери

Пěрремěш хут ҫак куҫҫуле тăкатăп:
Ыратнăн та халь, ыррăн та туятăп,
Пит йывăр парăма эп татнă пек,
Суранлă вырăна касса пěр хăрăс
Тӳрлетрě сиплě ҫěҫě! Моцарт тусăм,
Ҫак куҫҫуле... ăна эс ан пăх халě.
Қалах, васка, васка эс тултармашкăн
Ман чунăма илемлě кěввӳне...

Моцарт

Гармони хăватне мěнпур этем
Ҫапла туйсанччě!.. Ҫук: апла тěнче те
Пěтме пултарěччě,— ун чух никам та
Ака-суха тăвасшăн пулмěччě;
Илемлěх ирěкне иленěччěҫ.
Сахал вăл — пирěн пек телейлисем,
Қуллен-кунхи ҫăкăр-тăваршăн мар —
Илемлěхшěн хыпса ҫунакансем.
Ҫапла-и ку? Анчах эп чирлěрех,
Тем... йывăр пек; каям-ха, ҫывăрам...
Чипер юлсам.

Сальери

Чипер кайсам, эппин.

*(Пěччен.)*

Нумай, нумай эс ҫывăрăн халь, Моцарт!
Анчах чăнне каларě-ши вăл:
Эп гени мар-шим? «Генипе усал ěҫ
Нихҫан та пěрлешеймěҫ!»,— терě... Ҫук,
Қу тěрěс мар: Мěнле-ха Бонаротти?
Е ку айван пуҫсен айван юмахě?
Е никама та вěлермен пулсан
Ватикана чап кӳнě ҫав этем?

# Чул хăна

**Leporello.**

*O statua gentilissima*
*Del gran' Commendatore!..*
*...Ah, Padrone!*

Don Giovanni[1].

[1]**Лепорелло.**

*Эй, аслă командорăн*
*савнă палăкĕ!..*
*...Ах, хуçа!*

Дон Жуан (итальянла)





# I сцена

*Дон Гуанпа Лепорелло.*

Дон Гуан

Ҫаҫа кётсе илер кунта. Тинех
Эпир Мадрит хапхийӗ умӗнче!
Кӗҫех паллана урамсем тӑрӑх вӗҫтерӗп,
Плащ хуплӗ мӑйӑха, куҫ харшине — шлепке.
Мӗнле шутлатӑп? паллӗҫ-и мана?

Лепорелло

Ара! Дон Гуана ӑҫтан паллан!
Ун пеккисем ҫавтер нумай!

Дон Гуан

Шӳтлетӗн?
Ҫам паллӗ-ши?

Лепорелло

Чи пирвайхи хуралҫӑ,
Гитана е пӗр ӳсӗр музыкант,
Е ху пекки, пӗр сӗмсӗр кавалер,
Хул айӗнче ун шпага пур, плащпа вӑл.

Дон Гуан

Мӗнех вара, паллаччӑрах. Ан куртӑр
Мана король. Тӳрех калас пулсассӑн,
Эп Мадритра хӑрамӑп никамран.

Лепорелло

Ак ыранах король патне ҫитет:
Пуҫ янӑ вырӑнтан ним пӗлтермесӗр
Мадрита килнӗ Дон Гуан,— мӗн калӑр,
Мӗн туса хурӗ сирӗнпе?

Дон Гуан

Ҫалла ярать.
Шанатӑп,уншӑн пуҫӑма касмаҫҫӗ.
Патшалӑха сӑтӑр туман вӗт эпӗ.
Ҫунтан мана ыр кӑмӑлпах ӑсатнӑ;
Вилнин килӗйышӗ тек-текех мана
Ан аптӑраттӑр...

Лепорелло

Тӗрӗсне калатӑп!
Ларасчӗ сирӗн лӑпкӑн ҫавӑнтах.

Дон Гуан

Эй, ырӑ тарҫӑ! эп унта кӗҫех
Вилеттӗм тунсӑхпа. Ҫыннийӗсем те,
Ҫӗрӗ те! Тӳпи?.. тӗтӗм пекех.
Хӗрарӑмсем? Нихҫан та улӑштармӑп,
Куратӑн-и, ман айванскерӗм, Лепорелло,
Андалузири хресчен хӑрхӑмӗпе
Унти пӗрремӗш пикене — чӑнах та.
Кӑвак куҫпа та шур ӳчӗсемпе,
Сӑпайлӑхпа — тата ҫӗнӗлӗхпе
Вӗсем малтан кӑмӑлӑма каятчӗҫ;
Эй, шӗкӗрех турра, час сиссе илтӗм —
Эп куртӑм, вӗсене пӗлни те ҫылӑх,—
Вӗсен ҫук пурнӑҫ, ӑвӑс пукане пек;
Пирӗннисем?... Итле, пире ҫак вырӑн
Питех те паллӑ; сисрӗн-и ҫавна?

Лепорелло

Ҫаларӗ те: Антоньев монастырӗ
Асрах. Ҫилеттӗр тек-текех кунта,
Лашасене ҫак ращара тытаттӑм.
Тӳррӗн калас пулсан, ылханлӑ ӗҫ.
Кунта эсир тупаттӑр ырӑ канӑҫ,
Манран та лайӑх.

Дон Гуан

*(шухӑшлӑн)*

Мӗскӗнӗм, Инеза!
Вӑл ҫук текех! ӑна епле саваттӑм!

Лепорелло

Инеза! — хура куҫлӑччӗ... асрах-ха.
Эсир виҫ уйӑх чупрӑр хыҫалтан;
Юрать-ха пулӑшрӗ ун чух усалӗ.

Дон Гуан

Июльччӗ... каҫ. Тӗлӗнмелле рехетлӗх
Ун тунсӑх куҫӗнче, сив тутинче
Тупаттӑм эпӗ. Ку тӗлӗнмеллеччӗ.
Кӗртместӗнччӗ пулас эсӗ ӑна
Чиперккесен шутне. Чӑнах та, унӑн
Илемлӗхӗ сахалччӗ. Куҫӗсем ҫеҫ
Ялтратчӗҫ. Пӑхасса пӑхатчӗ... урӑх



Курман ун пек пăхакана. Сасси ун
Тӳлек, имшер — чирленě çыннăнни пек—
Ун упăшки сив чунлă путсěр çынччě,
Қăна кая юлса эп пěлтěм... Эй, Инеза!

Лепорелло

Мěнех, ун хыççăн пулчěç ыттисем.

Дон Гуан

Ку тěрěс.

Лепорелло

Чěрě пулсассăн, пулěç ыттисем те.

Дон Гуан

Чăнах.

Лепорелло

Хăшне-ши эпěр шырамашкăн
Пуçлатпăр Мадритра?

Дон Гуан

Лаурăна!
Эп ун умне тăма вěçетěп.

Лепорелло

Тěрěс.

Дон Гуан

Тӳрех ун алăкě патне — ытах
Тепри пулсан — сиктерěп кантăкран.

Лепорелло

Паллах. Эх, кайрăмăр та чěкелсе.
Вилнě хěрсем вăрах пăлхантармарěç.
Қам кунталла килет.

Манах кěрет.



Манах

Кӗҫех ҫитет вӑл
Кунта. Ҫамсем? Тен, Дона Анна йышӗ?

Лепорелло

Ҫук, ҫук, хамӑра хамӑр хуҫасем,
Ҫӳретпӗр уҫӑлса.

Дон Гуан

Ҫама кӗтетӗр?

Манах

Хӑй упӑшкин тӑпри ҫине кӗҫех ак
Ҫитет пуль Дона Анна.

Дон Гуан

Дона Анна
Де Сольва! вӗлернӗ командорӑн
Арӑмӗ!.. кам вӗлерсеччӗ — маннӑ.

Манах

Пӗр аскӑн, чыссӑр, тӗнсӗр Дон Гуан.

Лепорелло

Эхе! епле! халь Дон Гуан пирки
Тӳлек монастире те хыпар ҫитнӗ,
Манахӗсем мухтав юрри юрлаҫҫӗ.

Манах

Ӑна паллатӑр пулӗ?

Лепорелло

Эпӗр? Ҫук.
Ӑҫта вӑл халӗ?



М а н а х

Çук кунта вăл,
Ăна пуç янă инçете.

Л е п о р е л л о

Тавах турра.
Инçе пулни аван. Аскăнсене,
Миххе чиксе, пересчĕ тинĕсе.

Д о н  Г у а н

Мĕн-ма суятăн?

Л е п о р е л л о

Тăхтăр: эп юри...

Д о н  Г у а н

Апла командора кунта пытарнă?

М а н а х

Кунта; ун арăмĕ ларттарчĕ палăк,
Кашни кунах килет çак вырăна
Ун чунĕн канлĕхĕшĕн кĕлтумашкăн
Тата йĕме.

Д о н  Г у а н

Тĕлĕнмелле хĕрарăм.
Хăй чиперкке-и?

М а н а х

Пирĕн, манахсен,
Юрамĕ сăхланмашкăн илеме,
Суймашкăн çылăх; турă çыннисем те
Ун чаплă илемне пăхмасăр иртмĕç.

Д о н  Г у а н

Çĕре кĕни сăлтавсăр кĕвĕçмен.
Вăл Дона Аннăна шав питĕретчĕ,

Ăна никам та пирĕнтен курман.
Илесчĕ манăн калаçса унпа.

Манах

Э, Дона Анна арçынпа нихçан та
Çăвар уçмасть.

Дон Гуан

Сирĕнпеле, аттем?

Манах

Манпа йăлт урăхла вĕт: эп манах.
Ав хăй килет кунта.

Дона Анна кĕрет.

Дона Анна

Аттеçĕм, уçăр.

Манах

Халех, сеньора; эп кĕтеп сире.

Дона Анна манах хыççăн утать.

Лепорелло

Пырать-и?

Дон Гуан

Тăлăх хĕрарăмăн хура
Чатăрĕпе пĕркеннĕ те — курмарăм,
Çӳхе ура тупанĕ асăрханчĕ.

Лепорелло

Çитет сире. Вара пĕр самантрах ак
Ыттисене ăсра ӳкерсе хурăр;
Ăсра эсир пит хăвăрт ӳкеретĕр,
Сире пĕрех, кирек ăçтан пуçла,
Куç харшинчен е ураран.

Дон Гуан

Итле-ха, Лепорелло,
Унпа эп паллашатăп.

Лепорелло

Ак тата!
Пит кирлĕ! Упăшкине вĕлертĕн,
Халь тăлăх арăм куççульне курасшăн.
Эй, намăссăр!



4. Заказ № 2645.

Дон Гуан

Ак ĕнтĕ каҫ та пулчĕ.
Ҫӳл тӳпене сар уйăх тухиччен,
Каҫ сĕмлĕхне сирсе вăл яриччен
Кĕрер-ха Мадрита.

*(Каять.)*

Лепорелло

Испани гранчĕ
Вăрă пекех. Каҫа кĕтет. Эй, турă!
Ылханлă пурнăҫ. Вăрахчен-и эпĕ
Унпа айланăп? Чăн та, вăйăм ҫук.

*Тÿлĕм.*

*Лаура патĕнче касхи апатлану.*

П ĕ р р е м ĕ ш х ă н а

Тупа тăвап, Лаура, нихăçан
Çапла хастарлăхпа эс выляман-тăр.
Хăвăн рольна мĕнле тĕрĕс ăнланнă!

И к к ĕ м ĕ ш ĕ

Епле аталантартăн! епле вăйлă!

В и ç ç ĕ м ĕ ш ĕ

Мĕнтер искусство!

Л а у р а

Паян манăн ăнчĕ
Кашни хусканăвĕ, кашни сăмахĕ.
Хавхаланса эп кайрăм питĕ çăмăл,
Сăмахсем юхрĕç, вĕсене çуратрĕ
Чура ăс-пуçĕ мар, чĕре...

П ĕ р р е м ĕ ш ĕ

Ăнах та
Сан куçусем тăраççĕ йăлтăрса,
Питÿ çунать, иртсе каймасть-ха сан
Хавасла кăмăл. Усăсăр ăна,
Лаура, сивĕнме ан пар; Лаура,
Юрла мĕн те пулин.

Л а у р а

Гитара парăр.

*(Юрлать.)*

П у р т е

О bravo! bravo! лайăх! шутсăр лайăх!

П ĕ р р е м ĕ ш ĕ

Тавтапуçах, асамçă! Чĕрене эс
Тытса илтĕн. Пурнăçри киленĕç
Юратăва пĕр музăк паранать;
Анчах та юрату та кĕвĕ... кур:
Хăй Карлос çемĕçрĕ, салху хăна.

Иккĕмĕшĕ

Мĕнле сассем! мĕн чухлĕ чун-чĕре!
Сăвви, Лаура, камăн?

Лаура

Дон Гуанăн.

Дон Карлос

Мĕн? Дон Гуан!

Лаура

Сăввине тахçан
Ман лайăх тус, ман вĕлтĕр еркĕн çырнă.

Дон Карлос

Сан Дон Гуан вăл турăсăр та йĕксĕк,
Эс, эс ухмах.

Лаура

Эс тухнă-и ăсран?
Испани гранчĕ пулнине пăхмасăр
Тарçăсене сана пусма хушап.

Дон Карлос

*(тăрать)*

Чĕн вĕсене.

Пĕрремĕшĕ

Лаура, ĕнтĕ чарăн;
Дон Карлос, ан çиллен. Вăл маннă...

Лаура

Мĕн-мĕн? Тытăçура Гуан тӳп-тӳррĕн
Ун тăванне вĕлернине-и маннă?
Шел, сана мар.

Дон Карлос

Айван эп, çилленнишĕн.

Лаура

Аха! айванлăхна эппин йышнан.
Қил, килĕшер.

Дон Карлос

Эп айăплă, Лаура,
Қаçар мана. Пĕлетĕн-и: çавах
Эп лăпкăн ун ятне халь илтейместĕп...



Лаура

Эп айăплă пулатăп-и, самант та
Чĕлхем çинчен çав ят каймасть пулсассăн?

Хăна

Ну, хăв пачах та кўренмен пулсассăн,
Лаура, юрласам.

Лаура

Ыр çул сунса,
Çитет сĕм каç. Мĕн юрласа парам-ши?
Эй, итлĕр.

*(Юрлать.)*

Пурте

Питĕ чаплă, шутсăр лайăх!

Лаура

Господасем, сыв пулăр.

Хăнасем

Сыв пул, Лаура.

Тухса каяççĕ. Лаура Дон Карлоса чарать.

Лаура

Эс, урнăскер, ман патăмра юлсам,
Эс килĕшрĕн мана; Дон Гуана
Аса илтертĕн, ятлаçнă чух манпа,
Шăлна çыртсан, ун пек шатăртаттартăн.

Дон Карлос

Телейлĕскер!

Эс ăна савнă.

Лаура пуçĕпе сулса килĕшет.

Питĕ?



Лаура

Питĕ.

Дон Карлос

Саватăн халь те?

Лаура

Çакă самантра-и?
Çук, юратмастăп. Икке савмашкăн хĕн.
Саватăп халь сана.

Дон Карлос

Кала, Лаура,
Миçе çулта эс?

Лаура

Шăп вунсаккăрта.

Дон Карлос

Эс çамрăк... тата пилĕк-ултă çул
Юлатăн çамрăках. Сан тавралла
Тата улт çул вĕсем тек кĕпĕрленĕç,
Сана ачашлĕç, лăпкĕç те парнелĕç,
Каç-каç шăратĕç серенадăсем,
Пĕрне-пĕри вĕлерĕç саншăнах
Çул юппинче тĕттĕм чухне. Анчах
Вăхăт иртет, ун чух сан куçусем
Путса кĕрейĕç, куç хупаххисем
Пĕркеленсе хуралĕç, шурă çÿç
Çиттунинче вылянĕ, сана карчăк
Тесе çеç чĕнĕç — мĕскер калăн?

Лаура

Ун чух-и?
Ма шухăшлас халех? ма калаçас?
Тен, яланах çапла шутлатăн эсĕ?



Ав, пыр та — балкона уç. Тӳпе шăп;
Ăш сывлăш хускалмасть, лимон шăрши,
Лавр шăрши кĕрет, çап-çутă уйăх
Çăра сенкерлĕхре, сĕмре ялтрать.
Хуралçăсем тăсса калаççĕ: «Çутă!..»
Лере, тен, çурçĕрте — Париж енче —
Тӳпе пĕлĕтсемпе йăлтах хупланнă,
Çăвать-тăр сивĕ çумăр, çил вĕрет-тĕр.
Пире мĕн ĕç? итле-ха ĕнтĕ, Карлос,
Хушатăп эпĕ, кăшт кулса кăтарт...
— Ну, то-тă! —

Дон Карлос

Савнă демон!

Шаккаççĕ.

Дон Гуан

Хей! Лаура!

Лаура

Кам эс? ку кам сасси?

Дон Гуан

Уççам...

Лаура

Чăнах-и!.. Турă...

*(Алăка уçать, Дон Гуан кĕрет.)*

Дон Гуан

Сывлăх пултăр...

Лаура

Дон Гуан!..

*(Лаура ун мăйĕнчен çакăнать.)*



Дон Қарлос

Мĕн! Дон Гуан!..

Дон Гуан

Лаура, савнă тусăм!..

*(Ăна чуптăвать.)*

Қам пур кунта, Лаура?

Дон Қарлос

Эп,
Дон Қарлос.

Дон Гуан

Тĕлпулу, кăна кĕтменччĕ!
Ыран сана тивĕçтермешкĕн хатĕр!

Дон Қарлос

Çук!
Халех — çак самантра!

Лаура

Дон Қарлос, чарăн!
Эсир урамра мар — ман патăмра —
Тухса кайсам.

Дон Қарлос

*(ăна итлемест)*

Кĕтетĕп. Ну мĕнех,
Çумрах сан шпага.

Дон Гуан

Чăтăму çуках-тăк
Эп хирĕç мар, атя.

*Çапăçаççĕ.*

Лаура

Ай! Ай! Гуан!..

*(Вырӑн ҫине ӳкет.)*

Дон Карлос йӑванать.

Дон Гуан

Тӑрсам, Лаура, пӗтрӗ.

Лаура

Мӗн унта?
Вӗлернӗ? пит аван! ман пӳлӗмре!
Ман мӗн тӑвас халь, йӗксӗк, мур илесшӗ?
Ӑҫта хурам ӑна?

Дон Гуан

Тен, чӑнах та,
Вӑл чӗрӗ-ха.

Лаура

*(вилӗ ӳте пӑхать)*

Эх! чӗрӗ! кур, ҫӗр ҫӑтман,
Эс чӗренех лектернӗ — тен, тӳрех,
Суранӗ виҫ кӗтеслӗ, юн юхмасть,
Хӑй сывламасть — мӗнле?

Дон Гуан

Мӗскер тӑвар?
Ҫакна хӑй турӗ.

Лаура

Эх, эс, Дон Гуан,
Кӳренмелле. Ялан та ашкӑнатӑн —
Ҫавах айӑплӑ мар... Ӑҫтан килен?
Килни чылай-и?

Дон Гуан

Халӗ ҫеҫ ҫитсеттӗм
Хуллен-хуллен — мана вӗт каҫарман.

Лаура

Тӳрех хӑвӑн Лаурӑна асилтӗн?
Ку пит аван. Ҫавах та ҫитӗ, ҫитӗ,
Шанмастӑп эпӗ. Ӑнсӑртран иртӳҫӗн
Эс курнӑ ҫурт.

Дон Гуан

Çук, ман Лаура,
Ыйт Лепорел.лоран. Тăратăп эпĕ
Хуламăр хĕррипче. Лаурăна
Эп килнĕ шырамашкăн Мадрита.

*(Ăна чуптăвать.)*

Лаура

Тусăм!..
Тăхта... виле пур!.. мĕн тăвар унпа?

Дон Гуан

Вăл вырттăр: шуçăм умĕн, ир-ирех,
Ăна епанчапа витсе тухатăп,
Çул юппине хуратăп.

Лаура

Астусам,
Эс никама та курăннă ан пул.
Аван эс тунă, пĕр минут юлса
Каярах çитрĕн! манăн патăмра
Сан тусусем каçхи апат тусаччĕ.
Тин çеç кайрĕç. Хăçан тĕл пулăн!

Дон Гуан

Лаура, вăрах саватăн-и ăна?

Лаура

Кама? Эс аташан пуль.

Дон Гуан

Каласам,
Эп çук чухне миçе хутчен мана
Эс улталарăн?

Лаура

Хăв, ашкăнчăк, кала?

Дон Гуан

Кала... Çук, тепĕр чух пуплер эппин.

# III сцена

*Командор палакě.*

Дон Гуан

Аван пырать: вěлертěм ăнсăртран
Дон Карлоса, халь лăпкă манах евěр
Кунта пытантăм — кулленех курап
Тăлăх чиперккене, мана вăл,
Туятăп, асăрхарě. Халиччен
Пěрне-пěри чěнмен; анчах паян
Унпа пуçлатăп калаçмашкăн; вăхăт.
Мěнле пуçлас? «Хăятăп та...» е çук:
«Сеньора»... ха! пуçа мěскер килет.
Çавна калатăп, ним хатěрленмесěр,
Пулам импровизатор юратушăн...
Килме вăхăт ěнтě. Унсăр халь —
Шутлатăп эп — командора кичем.
Кунта ăна чăн улăпла кăтартнă!
Мěнле ун хулпуççийě! Геркулес!..
Çынни хăй пěчěкчě, имшерччě,
Кунта, чěрне вěççěн тăрса, аллипеле
Сăмси патне те кăнтарса çитеймě.
Унпа тěл пултăм Эскурьял енче,
Ман шпагăна вăл тирěнчě те хытрě,
Булавка тирнě шăрчăк пек,— хăй пур,
Мăнаçлă та хăюллăччě — хаярччě.
Э! Акă вăл.

Дона Анна кěрет.

Дона Анна

Каллех кунта. Аттеçěм,
Эп сирěн шухăшăра татрăм пулě —
Каçарăр.

Дон Гуан

Эпě тивěç каçару ыйтма
Сиртен, сеньора. Тен, эп кансěрлетěп
Хурлăхăра пěччен çеç пусармашкăн.

Дона Анна

Çук, аттеçěм, ман хурлăхăм ăшра,
Сирěн умра кěлтунисем тӳпешěн

Сăваплă пулěç — эпě тархаслатăп
Сире те хăвăр сассăра пама.

Дон Гуан

Пěрле ман кěлтăвас-и, Дона Анна!
Кун пек шăпа мана тивěçлě мар.
Эп çылăхлă тутасемпе каламăп
Сан хыççăн чи таса йăлăнăça —
Эп инçетрен чунтан хисеплесе
Сирěн çине пăхап, пуçа пěкетěр,
Хура çӳçе шупка çеç мрамор çийěн
Яратăр салатса — ун чух туятăп
Кунта пит вăрттăн аннăн пирěшти,
Ун чух именчěк чěремрен тухмаççě
Кěлě сăмахěсем. Эп тěлěнетěп,
Шутлатăп — вăл телейлě, сивě мрамор
Хěрарăм сывлăшпе-мěн ăшăнать,
Унта тумлатнá юрату куççулě...

Дона Анна

Сăмахăрсем — тěлěнмелле!

Дон Гуан

Сеньора?

Дона Анна

Мана... тен, маннă.

Дон Гуан

Мěн? Эп тивěç мар
Манах-и-мěн? Тен, çылăхлă ман сас
Кунта хыт янрама та кирлě мар-тăр?

Дона Анна

Туйăнчě çеç пуль... Эпě ăнланман...

Дон Гуан

Куратăп эп: эсир йăлтах пěлетěр!

Дона Анна

Мěскер пěлетěп?

Дон Гуан

Эпě манах мар —
Урăр умне ӳксе, каçарăр, тетěп.

Дона Анна

Эй, турă! тăрăр, тăрăр... Кам эсир?

Дон Гуан

Телейсĕрскер, шанчăксăр туйăм ывăлĕ.

Дона Анна

Эй, турăçăм! кунта, масар çинче!
Кайăр кунтан.

Дон Гуан

Минутлăх, Дона Анна,
Пĕр минутлăх!

Дона Анна

Кунта такам килсен!..

Дон Гуан

Çаклатнă карлăка. Тăхта минутлăх!

Дона Анна

Ну? мĕн? сире мĕн кирлĕ?

Дон Гуан

Вилĕм.
Халех уру умне ӳксе вилем,
Ман мĕскĕн ӳтĕме кунтах пытарччăр,
Эсир юратнă вилтăпри патнех,
Çывăхне мар — кăштах инçетерех,
Ав — алăк — унăн пусахи патне,
Мăнаçлă тупăк еннелле эсир,
Кăтра çӳçе усса, йĕмешкĕн пынă чух
Ман çийĕмри чула сĕртĕнсе иртĕр
Ун чух вăштăр тумпа е урăрпа.

Дона Анна

Тухнă эсир ăсран.

Дон Гуан

Е ман вилес,
Асран тухнă тесе халь, Дона Анна?
Пулсассăн ăссăр эп, чĕрех юлма
Шутлаттăмччĕ, ун чух пулатчĕ шанчăк
Чунна юратупа кăшт вăратмашкăн;
Пулсассăн ăссăр эп, каçсеренех
Сирĕн балкон айне пырса тăраттăм,
Юрлаттăм серенада, ыйăхна татса,
Пытанмăттăм çапла, унта-кунта та
Эп тăрăшăттăм сан умна пулмашкăн;
Пулсассăн ăссăр эп, сăмах чĕнмесĕр
Асапланас та çук...



Дона Анна

Эсир çапла
Чĕнместĕр-и?

Дон Гуан

Тӳр килчĕ, Дона Анна,
Çав хĕтĕртрĕ мана, ахаль нихçан
Ман вăрттăн хурлăха, тен, пĕлейместĕр.

Дона Анна

Саватăр-и мана, хăçантанпа?

Дон Гуан

Тахçан-и е тин çеç, пĕлместĕп хам та.
Самантлăх пурăнăç хакне туйнăранпа.
Çав вăхăтран чăннипелех ăнлантăм
Телей сăмах мĕне пĕлтернине.

Дона Анна

Ҫайсамăрччĕ — эсир хăрушă çын.

Дон Гуан

Хăруш? мĕнпе?

Дона Анна

Сăмахусем хăрушă.

Дон Гуан

Чĕнместĕп урăх; ан хăвалăрсам,
Сирĕн çине пăхни те маншăн савнăç.
Пуçтах шанчăкăма шанмастăп эп,
Ыйтмастăп нимĕн те, анчах сире
Ман курмаллах, мĕншĕн тесессĕн ĕмĕр
Эп асапланăп.



Дона Анна

Ҫайăр — кунта мар
Кун пек калаҫасси, ăссăр хăтланăҫ.
Ыран ман пата пыр. Хальхи пекех
Мана хисеплеме тупа тусассăн,
Сире эп йышăнап; сĕм каҫ пулсассăн,—
Тăлăха юлнă кунранах, хальччен
Эп никама кĕртмен...

Дон Гуан

Ах, Дона Анна!
Сире йăпаттăр турă, паян хăвăр
Телейсĕр мĕскĕне йăпатнă пек.

Дона Анна

Ҫайсамăрччĕ.

Дон Гуан

Тата минут тăрам хăть.

Дона Анна

Ҫук, хамăн каймалла пуль... кĕлтуни
Пуҫа кĕмест. Ҫалаҫтарса мана
Халь пăртăр урăх ҫĕрелле; хăлхаҫăм
Кун пек калаҫăва илтме те маннă.—
Ыран сире эп йышăнап.

Дон Гуан

Питех шанмастăп,
Телейĕм ытамне кĕме васкамăп...
Сире ыран куратăп! — кунта мар
Тата пытанса мар!

Дона Анна

Ыран, ыран.
Ятăр мĕнле?



Дон Гуан

Диего де Кальвадо.

Дона Анна

Сыв пулăр, Дон Диего.

*(Каять.)*

Дон Гуан

Лепорелло!

Лепорелло керет.

Лепорелло

Сире мĕн кирлĕ?

Дон Гуан

Савнă Лепорелло!
Телейлĕ эп!.. «Ыран — каҫа юлса...»
Ман Лепорелло, ыран — хатĕрленсем...
Телейлĕ эп, ача пекех!

Лепорелло

Дона Аннăпа
Калаҫрăр-и? тен, вăл ик-виҫ ачаш
Сăмах каларĕ пуль сире е эсĕр
Ăна чунтан-вартан пиллерĕр.

Дон Гуан

Ҫук, Лепорелло, ҫук! вăл тĕл пулмашкăн,
Мана курмашкăн килĕшрĕ!

Лепорелло

Чăнах-и!
Эй, тăлăх арăм, кашниех пĕр пек.

Дон Гуан

Телейлĕ эпĕ!
Эп юрлăп юрă, тĕнчене ыталăп.

Лепорелло

Çак командор? Мĕн калĕ кун пирки вăл?

Дон Гуан

Вăл кĕвĕçĕ тесе шутлатни эс?
Шанатăп: кĕвĕçмест, вăл ăслă çын,
Вилнĕренпе кăштах лăпланчĕ пулĕ.

Лепорелло

Çук, пăхăр-ха ун статуйи çине.

Дон Гуан

Мĕнех?

Лепорелло

Сирĕн çине пăхать пек вăл
Çиллессĕн.

Дон Гуан

Пыр та, Лепорелло,
Ăна чĕнсемччĕ манăн патăма —
Çук, Дона Анна патне пытăр вăл ыран.

Лепорелло

Статуйăна чĕнетĕн хăнана! мĕн-ма?

Дон Гуан

Паллах, унпа ларăймăп калаçса —
Статуйăна чĕн, сĕм каçа юлса,
Вăл çиттĕр Дона Анна кил-çуртне,
Алăк патне вара хурала тăтăр,
Кала ăна.

Лепорелло

Ма сан шӳтлес килет,
Тата кампа?

Дон Гуан

Вĕçтер.

Лепорелло

Анчах...



5. Заказ № 2645.

Дон Гуан

Вĕçтер.

Лепорелло

Мухтавлă, ытарма та çук статуя!
Улпутăм Дон Гуан сире чунтан
Пыма чĕнет... Эй, турă, майĕ çук,
Хăратăп эп.

Дон Гуан

Хăравçă! ак сана!..

Лепорелло

Ирĕк парăр.
Улпутăм Дон Гуан ыран сире
Ķаçа юлса, хăв мăшăру патне
Пыма ыйтать, унта алăк умне
Хурал тăратăр...

Статуя, килĕшсе, пуçĕпе сулать.

Ай!

Дон Гуан

Мĕн унта?

Лепорелло

Ай, ай!..
Ай, ай. Вилеп!

Дон Гуан

Мĕн пулчĕ санпала?

Лепорелло
*(пуçĕпе сулса)*

Статуя... ай!

Дон Гуан

Эс пуç таятăн!

Лепорелло

Çук,
Эп мар, ав, вăл!

Дон Гуан

Ķирлĕ мара палкан!

Лепорелло

Хӑвӑр пырӑр.

Дон Гуан

Ну, асту, сулланчӑк!

*(Статуйӑна.)*

Хӑв тӑлӑх арӑму патне ыран
Пыр, командор, унта пулатӑп эпӗ,
Эс хурала тӑр алӑка. Пыратни?

Статуя пуҫӗпе сулать.

Эй, турӑ!

Лепорелло

Мӗн? каларӑм вӗт...

Дон Гуан

Каяр.

## IV сцена

### Дона Анна пӳлӗмӗ.

Дон Гуанпа Дона Анна.

Дона Анна

Эп йышӑнтӑм сире халь, Дон Диего;
Анчах хӑрап, ман хурлӑ калаҫу
Сире пустарӗ тунсӑх: тӑлӑх арӑм,
Йӑлт астӑвап ҫухатӑва. Куҫҫулӗ
Кулӑпала пӗрлешӗнет, апрель пек.
Ма шӑп эсир?

Дон Гуан

Чӗнмесӗр киленетӗп,
Шухӑшпала аван-ҫке Дона Аннӑпа
Пӗччен пулма. Анчах — кунта, ҫук, лере мар
Телейлӗ вилӗн ҫӗрӗ ҫинче мар —
Курмастӑп мрамор упӑшкӑр умне
Пуҫ тайнине.

Дона Анна

Дон Диего, эсӗр
Ҫав тери кӗвӗҫ.— Тупӑкри ман мӑшӑр
Асап ярать-и?

Дон Гуан

Ман кӗвӗҫме май ҫук.
Сире вӑл илнӗ суйласа.

Дона Анна

Ҫук, анне
Дон Альвара качча каймашкӑн хушрӗ,
Эпир ҫараччӗ, Дон Альвар пуян.

Дон Гуан

Телейлӗскер! вӑл пуш пуянлӑхне
Турӑш ури умне хурать те — уншӑн
Рай ырлӑхне вӑл туянать. Ытах та
Эп пӗлнӗ-тӗк малтан, мӗнле хаваслӑн
Хам ятӑма, пуянлӑха — йӑлт парӑттӑм,
Йӑлтах — пӗрре пӑхнишӗн кӑмӑлпа;
Таса ҫеҫ кӑмӑлун чури эп пулӑттӑм,
Сан пӗтӗм йӑлуна эп вӗренсе

Малтан туса пыма хатӗрленеттӗм;
Пурнӑҫунта вӗҫсӗр асамлӑх пултӑр.
Анчах май ҫук! — Шӑпамҫӑм урӑхла.

Дона Анна

Диего, чарӑнсамӑр: ҫылӑха
Кӗретӗп калаҫса,— савма ман юрамасть,
Вилешӗн те — пул тӗрӗс тӑлӑх арӑм.
Эсир пӗлсенччӗ, Дон Альвар мана
Мӗнле юратнине! эй, Дон Альвар,
Савсассӑн та, хӑй тӑлӑха юлас-тӑк,
Хӗрарӑм кӗртес ҫук.— Тытатчӗ ҫирӗп
Вӑл мӑшӑрлӑх чысне.

Дон Гуан

Асап ан кӳрӗр
Чуна, пӗрмай упӑшкӑра аса илсе,
Мана хӗн кӑтартса сана ҫитмест-и,
Эп тивӗҫ пулӗ хӗн курма та...

Дона Анна

Мӗншӗн?
Эсир тасалӑх тӗввипе никампала та
Ҫыхӑнайман.— Чӑнах? Мана савса,
Манпа тӳпемӗр умӗнче те тӗрӗс.

Дон Гуан

Сан умӑнта! Эй, турӑ!

Дона Анна

Ман умра
Эс айӑплӑ? Кала, эппин, мӗнпе.

Дон Гуан

Ҫук!
Ҫук, нихҫан та.

Дона Анна

Диего, ку мӗскер?
Эсир мана суятӑр, мӗншӗн, калӑр.

Дон Гуан

Ҫук! тем тусан та!

Дона Анна

Диего, тӗлӗнтерен:
Ыйтатӑп эп, хушатӑп эп.

Дон Гуан

Çук, çук.

Дона Анна

Ман кăмăла эсир çапла итлетĕр!
Тин çеç мĕн терĕр-ха эсир мана?
Чура пулма та хатĕрччĕ-çке ман.
Эп çилленеп, Диего: хăвăрт калăр,
Мĕн айăп пур сан ман умра?

Дон Гуан

Хăймастăп.
Пулатăр курайми эсир мана.

Дона Анна

Çук, çук. Эп каçаратăп малтанах,
Анчах пĕлесчĕ...

Дон Гуан

Ан çунăр пĕлесшĕн
Хăрушă, вилесле вăрттăнлăха.

Дона Анна

Хăруш! мана асап кӳретĕр.
Ман çав тери пĕлес килет — мĕскер вăл?
Мана кӳрентерме мĕнле пултартăр?
Сире пĕлмен эп — манăн тăшмансем
Пулман та, çук. Упăшкана вĕлернĕ.
Пĕр этем çеç.

Дон Гуан

*(хăй ăшĕнче)*

Ак вĕçне тухать!
Калăр, Дон Гуана, телейсĕре,
Паллатăр-и?

Дона Анна

Çук, ĕмĕрне те
Ăна курман.

Дон Гуан

Эсир чунра ăна
Хыт кураймастăр?

Дона Анна

Чыс тивĕçĕпе.
Эсир ман ыйтуран айккинелле



Мана пӑрса яратӑр, Дон Диего —
Хушатӑп эп...

Дон Гуан

Дон Гуана ытах та
Эсир курас-тӑк?

Дона Анна

Ҫав усалӑнне
Ҫинжал лартаттӑм чӗрине эп.

Дон Гуан

Дона Анна,
Ӑҫта сан кинжалу? ак кӑкӑр ман.

Дона Анна

Диего!
Мӗн эс?

Дон Гуан

Диего мар эп, эп Гуан.

Дона Анна

Эй, турӑ! Ҫук, шанмастӑп, ӗненместӗп.

Дон Гуан

Эп Дон Гуан.

Дона Анна

Суятӑн.

Дон Гуан

Эп вӗлертӗм
Сан мӑшӑрна: пӗрре те шеллеместӗп
Эп ун пирки — ман ӳкӗнӗҫ те ҫук.



Дона Анна

Мĕскер илтеп? Пулма пултараймасть.

Дон Гуан

Эп Дон Гуан, сана саватăп эп.

Дона Анна

*(ӳкнĕ май)*

Ăçта?.. ăçта эп? япăх, эп вилеп.

Дон Гуан

Тӳпе!

Ана мĕн пулчĕ? мĕн эс, Дона Анна?
Тăр, тăр, вăран, тăна кĕр: сан Диего,
Чуру сан умăнта.

Дона Анна

Ан тив мана!

*(Вăйсăррăн.)*

Эс ман тăшман — эс илтĕн пĕтĕмпех
Эп пурнăçра юратнине...

Дон Гуан

Чиперĕм!

Эп хатĕр халĕ пĕтĕмпех тӳсме,
Сан умăнта эс хушасса кĕтетĕп,
Хуш çеç — вилеп; хуш çеç — пĕр саншăн
Эп сывлăп...

Дона Анна

Эсĕ Дон Гуан апла...

Дон Гуан

Усал та чунилли тесе сире
Каланă ман çинчен.— Эй, Дона Анна,—

Сасси-хури, тен, пит тӗрӗсех мар,
Ĕшенчĕк чысӑн усалли нумай,
Тен, ҫав пусать. Эп чылайччен, чӑнах та,
Ҫӳрерӗм аскӑнчӑк ача пулса,
Анчах та сире курнӑ вӑхӑтран
Туятӑп ҫӗнӗрен ҫуралнӑ майлӑ.
Сире савса, ырра эп юрататӑп,
Ун умӗнче пӗрремӗш хут йӑвашшӑн
Чӗтревлӗ урапа чӗркуҫленетӗп.

Дона Анна

Ах, Дон Гуан чӗлхи япшар — пӗлетӗп,
Эп илтнӗччӗ; пуҫ ҫавӑрма ӑста вӑл.
Турра пӑхмасӑр астаратӑр, теҫҫӗ,
Эсир чӑн демон. Мӗн тери пӗтернӗ
Арӑмсене?

Дон Гуан

Пӗрне те паянччен эп
Савман.

Дона Анна

Шанас-и манӑн Дон Гуан
Пӗрремӗш хут саватӑп тенине,
Манра вӑл ҫӗн йӑпанӑҫ шырамасть-и!

Дон Гуан

Шут тытнӑ-тӑк сире улталама,
Эсир илтме пултарайман ята,
Йӑлтах уҫса парса, калас та ҫукчӗ.
Пур-и кунта хатӗрленни, хаярлӑх?

Дона Анна

Пӗл-ха сире? — Кунта килме эсир
Мӗнле пултарнӑ; пӗлсенех сире
Пӗр тӑхтаса тӑмасӑрах вӗлерӗҫ.

Дон Гуан

Мӗскер вӑл вилӗм? тутлӑ тӗлпулушӑн
Пурнӑҫӑма ӳпкевсӗр парӑп.

Дона Анна

Пурпӗр
Кунтан мӗнле тухайӑр-ши, чарусӑр!



6. Заказ № 2645.

Дон Гуан

*(ун аллине чуптăвать)*

Мěскěн Гуанăн пурнăçě пирки
Пăшăрханатăр! Ҫураймалăх çук
Апла таса чун-чěрӳнте сан, Дона Анна?

Дона Анна

Сире эп курайми пулас пулсанччě!
Ҫавах та пирěн вăхăт уйрăлма.

Дон Гуан

Тепре хăçан тěл пулăпăр?

Дона Анна

Пěлместěп.
Мехел çитсен.

Дон Гуан

Ыран.

Дона Анна

Ăçта?

Дон Гуан

Кунта.

Дона Анна

Эй, Дон Гуан, чěрем епле йăваш.

Дон Гуан

Уйрăлнă майăн тăнăç чуптăву...

Дона Анна

Вăхăт, каях.

Дон Гуан

Пěр хут, ячěшěн çеç...

Дона Анна

Епле вăл çулăхать! эппин, ак, ме.
Такам шаккать?.. пытанччě, Дон Гуан.

Дон Гуан

Сыв пул, тěл пуличчен, ман савнă тусăм.

*(Каять, каяллах чупса кěрет.)*

А!..

Дона Анна

Мĕн пулчĕ? А!..

Командор статуйи кĕрет.
Дона Анна ÿкет.

Статуя

Чĕнетĕн те, çитрĕм.

Дон Гуан

Эй, турă! Дона Анна!

Статуя

Кай унтан,
Йалт пĕтрĕ. Чĕтĕретĕн, Дон Гуан.

Дон Гуан

Эп? çук. Эп чĕнтĕм те — курма хавас.

Статуя

Кÿр ална.

Дон Гуан

Ак, ме... эй, йывăр-çке
Чул аллипе пăчăртаса тытсассăн!
Хăвар мана, вĕçерт — вĕçерт алла...
Пĕтетĕп эпĕ — пĕтрĕ — Дона Анна!

Йăтăнса анаççĕ.

# Чума вăхăтĕнчи ĕçкĕ-çикĕ

Вильсонăн
THE CITY OF THE PLAGUE[1]
[1](Чума хули — акăлчанла)
трагедийĕн сыпăкĕ





Ҫамрӑк ҫын

Хисеплӗ председатель! асилтерӗп
Пӗр ҫын ҫинчен, эпир ӑна паллатпӑр,
Ун шӳчӗсем те кулӑшла хайлавӗ,
Ҫивӗч отвечӗ е пӗр-пӗр пуплевӗ,
Пӗлтерӗшлӗн мыскарасем тусассӑн,
Кӗрекене чӗрӗлӗхпе чӗртетчӗ,
Тӗксӗмлӗхе сиретчӗ; халӗ сӗмлӗх
Чире, хӑнамӑра пула, пӗр вӗҫсӗр
Чи ҫутӑ ӑс-пуҫа пӳлсе хурать.
Виҫмине ҫеҫ ун калавне мухтанӑ
Кула-кула эпир; манма май ҫук
Хаваслӑн хамӑр ӗҫнӗ-ҫинӗ майӑн
Ҫав Джаксона. Ав, креслисем лараҫҫӗ,
Пушах вӗсем, ялан кӗтеҫҫӗ тейӗн
Путишскере — ӑсаннӑ вӑл кунтан
Ҫӗр айӗнчи сип-сивӗ кил-ҫурта...
Хитре калаҫакан чӗлхи-ҫӑварӗ
Тупӑк тусанӗнче шӑпланайман-ха,
Анчах та чӗррисем нумай, пире
Пуҫа усни килӗшес ҫук. Апла
Чӗнеп ӑна эп асӑнса ӗҫмешкӗн
Черккесене ян-янратса, хӗрӳллӗн,
Вӑл чӗрӗ чухнехи пекех.

Председатель

Пӗрремӗш

Пирӗн йышран вӑл пулчӗ. Ҫавӑнпа та
Ӗҫер-ха шӑппӑн.

Ҫамрӑк ҫын

Пултӑрах ҫапла.

Пурте чӗмсӗррӗн ӗҫеҫҫӗ.

Председатель

Санӑн сассу янӑрататать ҫеҫ, чунӑм,
Тӑван юрӑсене ытла йӗлемлӗн;
Юрлаччӗ, Мери, тӑстарса салхуллӑн,
Кайран хавасланма пуҫласчӗ пирӗн
Асран тухса, леш хайхи, кунтан
Усал вӑй илсе кайнӑ ҫын пек.

## Мери
*(юрлать)*

Пулнă вăхăт, ешеретчĕ
Пирĕн ен тăнăçлăхра;
Вырсарнисенче çӳретчĕç
Турă чиркĕвне вара;
Шавлă шкулсенче янратчĕç
Ачамсемĕр сассисем,
Çутă уй-хирте ялтратчĕç
Çурласем те çавасем.

Чиркӳ пушă, епле пырăн;
Шкула лартнă питĕрсе;
Юхса тухрĕ пулнă тырă;
Пуш-пушах сĕм вăрмансем;
Ялĕ, çуннă кил-çурт евĕр,
Шăппăн куранса ларать,—
Масарсен кăна кĕрлевĕ
Ӳснĕçем ӳссе пырать.

Самантран виле йăтаççĕ,
Чĕррисен хӳхлевĕсем
Шиклĕн турăран ыйтаççĕ —
Лăпланасшăн чунĕсем.

Самантран ыйтаççĕ вырăн,
Кирлĕ шăтăк кашнине,
Шиклĕ кĕтӳ майлă пырĕç
Хĕсĕк çеç черетсене.

Тен, алтмашкăн пултаратăн
Шăтăк çурхи кун валли —
Пĕлнĕ пул, сана саваттăм,
Эс ман савăнăç палли,—
Йăлăнатăп: эс ан сĕкĕн
Хăвăн Дженни çывăхне,
Вилĕ тутине ан сĕртĕн,
Инçетрен йĕрле çулне.

Эс кайран яла хăвар та,
Хуть ăçта тухса ăсан,
Чун асаплăхне мантар та,
Пĕр йăпан та тутлăн кан.
Мур тавращĕ тасалсассăн,
Пыр мĕскĕн тăпрам çине;
Тӳпере те сывлĕ ассăн
Дженни, манмĕ Эдмондне.

Председатель

Тавах сана, шухăша путнă Мери,
Тавах сана, эрлентерен юррушăн.
Иккен, çӳренĕ сирĕн сăрт-варта та
Кунти пекех хаяр чума таврашĕ,
Унта та мĕскĕн ахлату янранă
Хумсемпеле шывсен çыранĕнче,
Вăл тăрăхра халь савнăçлăн та мирлĕн
Тăван çĕрӳ райри пек ешерет;
Çав хаяр çул мĕн чухлĕ паттăр, ырă
Çынсем пĕтмен-ши, асăнмалăх
Ахаль кĕтӳçĕн тунсăх та ятуллă
Юррисенче кăна хăйсен ятне
Хăварнă курăнать... Çук, савнăçра
Чĕререн тухнă хурлă сасă евĕр
Тек нимĕн те пире хурлантармасть.

Мери

О, нихăçан та манăн юрлас марччĕ,
Атте-аннемĕр çурт тулашĕнче!
Савса вĕсем итлетчĕç Мерие;
Тăван кил-çуртăм умĕнче халь эпĕ
Туятăп хам сасса хамах итленĕн.
Ун чух ман сас илемлĕрехчĕ, вăл
Айăпсăр сасчĕ.

Луиза

Халь модăра мар çав
Ку юрăсем. Анчах та мĕскĕн чун
Пĕтмен-ха, пур: хĕрарăм куççульне
Курсан йĕреççĕ, суккăррăн шанаççĕ.
Шанать хĕрарăм, куççульне пăхсассăн
Ăна çĕнтерес çук — çав хушăрах вăл
Хăйĕн кулли пирки шутлас-тăк, кулĕ
Вăл пĕрехмай. Мухтатчĕ Вальсингам
Çурçĕр енчи çухра пикесене:
Ку çавăнпа ахлатрĕ. Курăймастăп
Шотланди çынĕн çӳç сарăлăхне.

Председатель

Тăнлăр: илтетĕп урапа сасси.

Вилесем тиенĕ урапа килет. Тилхепине негр тытса пырать.

Аха! Луизăпа начар; калаçнă тăрăх,
Унра арçын чĕри, тесе шутлаттăм.
Ачашшинчен хаяр вăйсăртарах-мĕн,
Сехре хăппи пурнать чун тертĕнче.
Сап, Мери, ун питне шывпа. Халь лайăх.



Мери

Ман хурлăхăмпа намăслăхăн йăмăкĕ,
Хур кăкăрăм çине пуçна.

Луиза

*(тăна кĕрсе)*

Хăрушă
Демона куртăм: хуп-хура, шур куçлă...
Хăй урапи çине мана вăл чĕнчĕ.
Унта выртаççĕ вилесем — пуплеççĕ
Хăрушшăн, ăнланма та майĕ çук...
Мана пĕлтерĕр: тĕлĕк куртăм пулĕ?
Урапапа, тен, иртрĕç?

Çамрăк çын

Ну, Луиза,
Хаваслансам — ан тив, урамĕ пирĕн
Сив вилĕмрен пытанмалли пулсан та,
Пĕр пăлханусăр ĕçкĕ-çикĕ хӳтлĕхĕ,
Анчах хура урапана пĕлетĕн,
Вăл пур çĕре çитме те пултарать.
Вăл иртсе кайтăр тивĕçлĕн. Итле-ха
Эс, Вальсингам: тавлашăва чармашкăн
Тата хĕрарăмсем тăнран ан кайччăр,
Тесе юрла пире валли хаваслă юрă,
Унта Шотланди тунсăхĕ ан пултăр,
Кăпăкланса тăран курка йăтсассăн
Çуралнă чăрсăр юрăсем юрла.

Председатель

Ун пеккине пĕлместĕп, юрлăп гимн
Чума чысне,— ăна эп иртнĕ каç
Çырса пăрахрăм, хамăр уйрăлсан.
Пурнăçăмра пуçламăш рифмăларăм
Хам ирĕкпе. Халь итлĕрсем мана:
Хăрăлти сассăм юррăмшăн юравлă.



Пурте

Чумашăн гимн! итлĕпĕр ăна!
Чумашăн гимн! аван та! bravo! bravo!

Председатель

*(юрлать)*

Хăватлă та хаяр Хĕлле
Çулпуç пекех ертсе килет
Пирĕн çине сивĕпе юрăн
Илес-милес çарĕсене,—
Çунаççĕ каминсем маттуррăн,
Вĕсене хирĕç ун чухне.

*

Хаяр патша майра, Чума,
Хăех килет пире вырма,
Вăл мухтанать нумай вырассăн;
Шăтăк алтан кĕреçепе
Шаккать вăл кантăкран ир-каçăн.
Кам пулăшать? тата мĕнпе?

*

Пытаннă пек Хĕл аскăнран,
Питĕрĕнетпĕр Чумаран,
Çутă çутса, курка йăтатпăр,
Ăсран йăлтах тухса кайса,
Балсем те ĕçкĕ тапрататпăр,
Чума-чире саламласа.

*

Савăнăç пур çапăçура,
Пурах вăл тĕпсĕр шăтăкра,
Пур уракан океанра та,
Пур сĕмлĕхре, хум хушшинче,
Аравири çил-тăвăлра та,
Пур вăл Чума варкăшĕнче.

*

Йăлт, вилĕмпе мĕн хăратать,
Чĕрешĕн пытарса усрать
Тĕлĕнмелле ырă йăпанăç —
Тен, вилĕмсĕрлĕх сых ятне?
Ҫам ăна курнă, çав ăнланĕ
Чăн-чăн телей мĕн иккенне.

*

Ҫапла,— мухтав сана, Чума,
Пире масар халь хăратмасть,
Сан туртăмушăн именместпĕр.
Ҫăпăкланаççĕ куркасем,
Чечек-хĕр сывлăшне ĕçетпĕр,—
Тен... йăлт Чума сывлăшĕсем.

Вата священник кĕрет.

Священник

Турăсăр ĕçкĕ, турăсăр айванлăх!
Ĕçни-çини е аскăнчăклă юрă
Ҫулни пулать вăл сĕм шăплăхĕнчен,
Талккишĕпех ăна саратьçке вилĕм!
Хăруш йĕре-йĕре пытарнă чух,
Масар çинче çынсемшĕн кĕлтăвап эп,
Ҫурайманла хаваслăхăрсем сирĕн
Вăтантараççĕ тупăк шăплăхне —
Виле выртан çĕре кисрентереççĕ.
Ватти е арăмсем вил шăтăкне
Пуççапнипе паман пулсан тасалăх,—
Шутлаттăм пулĕ: шуйттансем асаççĕ.
Турăсăрсен ӳтне пĕр шеллемесĕр,
Тĕттĕмлĕхе кула-кула туртаççĕ.

Темиçе сасă

Аста вăл калаçать тамăк пирки.
Уттар, старик! уттар хăв çулупа эс.

Священник

Эп тархаслап пире хăтараканăн,
Пирĕншĕн пăталанă тур юнĕпе:
Ҫилпетсĕр ĕçке чарăр, тӳпере
Хăвăр çуратнă савнă чунсене
Тĕл пуласса шанса тăратăр авă.
Саланăр хăвăр килсене.

Председатель

Ҫилсем.
Хурланчăк пирĕн — яшлăх савăнасшăн.

Священник

Эсех-и, Вальсингам? эсех-и ку,
Пĕр виç эрне калла чĕркуçленсе
Аннӳн ӳтне йĕрсе ыталакан,
Тăпри çинче ăсран тухса эс йĕтĕн?
Е шухăшлатăн: халь йĕмест анне,
Çӳл тӳпере йӳç куççульпе йĕмест
Ĕçкĕпеле иртĕхекен ачишĕн,
Таса кĕлĕсемпе хурланчăк витĕр
Урмăш саспа юрлан юрра илтсен?
Утсам ман хыççăн!

Председатель

Мĕншĕн эс
Пăлхантарса çӳрен. Пултараймастăп
Сан хыçăнтан пыма. Çухалнă шанăç,
Асанлӳ, саккунсăрлăхăм манăн
Кунта тытса чарать пĕле тăркач,
Вил пушсăрлăх хăрушлăхĕ ялан
Кил-çуртăмра кĕтсе тăрать пулсассăн —
Çак ăссăр хавассен çĕнĕ хыпарĕ,
Наркăмăшпа тулли курка сипечĕ,
Аннен ачашлăхĕ (каçартăр ĕнтĕ турă),
Вăл ырăччĕ,— мана тытать кунта...
Аннен мĕлки мана кунтан чĕнеймĕ,
Кая юлса илтетĕп сассуна,
Ан чĕн мана,— çăлмашкăн вăй хунишĕн
Тавах: старик, кайсамччĕ эсĕ мирлĕн;
Қам сан хыçран каять, ăна ылхан.

Нумайăшĕ

Bravo! bravo! вăл тивĕç председатель!
Ак сана кĕлĕ! уттарсам! уттар!

Священник

Сана Матильда сывлăшĕ чĕнет!

Председатель

*(тăрать)*

Вăй-халсăр, шуранка аллусене
Тӳпене тăс та — тупа ту мана эс,
Тупăка кĕнĕ ятсене манмашкăн!
Матильдăн ĕмĕр чĕрĕ куçĕнчен
Пытараясчĕ çаксене! Тахçан вăл
Мана таса, мăнаçлă, ирĕк, тетчĕ,—

Ман ытамра тупатчĕ вăл çăтмах...
Эпĕ ăçта? Тĕнчен таса ачийĕ!
Унта курап сана, çылăхлă чунăм
Çитеймĕ сан патна...

Хĕрарăм сасси

Вăл ăсран тухнă,—
Вăл аташать вил арăмĕ пирки.

Священник

Каяр, каяр...

Председатель

Аттеçĕм, турă пулăр,
Хăвар мана.

Священник

Хăтартăр сана турă.
Каçар, ачам.

Каять. Ĕçкĕ-çикĕ малалла пырать.
Председатель тарăн шухăша путса юлать.

## ТУПМАЛЛИ


ЧĂВАШ ÇЫРАВÇИСЕМ
А. С. ПУШКИН ÇИНЧЕН

А. С. Пушкин — пирĕн юратнă поэт...
*П. П. Хусанкай* . . . . . . . 6

А. С. Пушкин — чăн-чăн халăх поэчĕ.
*М. Я. Сироткин* . . . . . . 7

А. С. Пушкин — вырăссен аслă поэчĕ.
*Е. В. Владимиров* . . . . . . . 8

Поэзи сачĕ.
*А. Е. Алга* . . . . . . . . 9

ХЫТ ĶУĶАР РЫЦАРЬ
*Ю. Г. Айдаш* куçарнă . . . . . 10

МОЦАРТПА САЛЬЕРИ
*П. П. Хусанкай* куçарнă . . . . . 30

ЧУЛ ХАНА
*Г. А. Ефимов* куçарнă . . . . . . 42

ЧУМА ВАХĂТĔНЧИ ЁÇКĔ-ÇИКĔ
*Г. А. Ефимов* куçарнă . . . . . . 76

Александр Сергеевич
Пушкин

МАЛЕНЬКИЕ
ТРАГЕДИИ

*Для старшего школьного возраста*

На чувашском языке

Переводчики *Ю. Г. Айдаш, П. П. Хузангай,*
*Г. А. Ефимов*

Редактор *П. Е. Димитриев*
Оформление, иллюстрации и ретушь *Э. М. Юрьева*
Художественный редактор *Е. Е. Михайлова*
Технический редактор *Г. С. Самсонова*
Корректор *Н. П. Печникова*
Наборщик *Н. М. Мартынова*
Печатник *Ю. Ф. Цаплин*
Переплетчик *Н. Н. Николаев*

ИБ 1406

Сдано в набор 1.07.83.
Подписано в печать 18.11.83.
Формат $60 \times 90^1/_{16}$.
Бумага офсетная № 1.
Гарнитура Литературная.
Печать офсетная. Усл. печ. л. 5,5. Усл. кр.-отт. 11,69.
Учетно-изд. л. 4,46.
Тираж 2000 экз.
Заказ № 2645.
Изд. № 94.
Цена 65 коп., с футляром 75 коп.
Чувашское книжное издательство
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1
Государственного комитета
Чувашской АССР
по делам издательств,
полиграфии и
книжной торговли
428019, Чебоксары,
Канашское шоссе, 15.

ББК Р1
П 91

Пушкин А. С.
П 91 Пĕчĕк трагедисем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 1983.— 88 с.
30 п.

ББК Р1

П $\frac{4803010101-158}{M136(03)-82}$ 94—83

ХАКĔ 65 ПУС

ФУТЛЯРЛИ
70 ПУС

ШУПАШКАР

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ